ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

ЧĂВАШ КОММУНИ

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН ТАТА ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНĂЙ СОВЕЧĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

1952 çул
Январь
25
ЭРНЕКУН
№ 19 (8671)
Хакĕ 20 пус.
34-мĕш çул тухать.

ПАЯНХИ НОМЕРТЕ:

В. И. Ленина асăнса иртternĕ хурлăхлă чаплă ларусем (1 стр.).
Малта пыракан трактористкăсен обязательстви (1 стр.).
Совет Союзĕ тăрăх (1 стр.).
Большевиксен партийĕпе Совет государствин паллă деятелĕ. В. В. Куйбышев вилнĕренпе 17 çул çитнĕ май (2 стр.).
ПУÇЛАМĂШ ПАРТОРГАНИЗАЦИСЕН ĔÇ ОПЫТĔНЧЕН. **П. Павлов.** — Ĕçри çитĕнӳсем — активпа тачă çыхăнса ĕçленинче (2 стр.).
ÇУРАКИНЕ БОЛЬШЕВИКЛА ХАТĔРЛЕНĔР! **А. Александров.**—Çĕрпӳ МТС-че тракторсене лайăх юсамаççĕ; **И. Михайлов, А. Тукмаков, Н. Волков.** — Вырăнти удобренисем ытларах хатĕрлемелле (2 стр.).
В. И. Ленин вилнĕренпе 28 çул çитнĕ ятпа урăх çĕршывсенчи пулнă хурлăхлă чаплă ларусем (3 стр.).
Ленин кунĕсенче (3 стр.).
Радиофикаци ĕçне тĕпрен вăйлатмалла (3 стр.).
Г. Русанов.—Сĕм вăрман кашланă çĕрте (3 стр.).
ООН Генеральнăй Ассамблейин ултăмĕш сессийĕ (4 стр.).
Корейăри ĕçсем (4 стр.).

Комсомол вăйĕ— партии ертсе пынинче

ВЛКСМ членĕ пулассии—совет çамрăкĕсен çав тери чыслă та хисеплĕ ĕмĕчĕ. Владимир Ильич Ленин çапла каланă: кашни çамрăк çын Çамрăксен Коммунистла Союзне кĕрсе, коммунизм тăвас ĕçре партие пулăшма тата пĕтĕм çамрăк йăрăва коммунизмлă общество туса çитерме пулăшса пыма тупа тăвать.

Комсомол хăйĕн пĕтĕм ĕçне, кулленхи вĕренĕвне Ленин—Сталин партийĕн тата Совет правительствин интересĕсемпе, коммунизм тăвас тĕллевпе тачă çыхăнтарать. ВЛКСМ членĕсем халăх хуçалăхĕпе культура строительствин пур участокĕсенче те хăйсен пултарулăхне анлă палăртаççĕ, большевиксен партийĕ Тăван çĕршыв умне лартнă задачăсене пурнăçлас тĕлĕшпе пĕтĕм вăй-хăвата парса ĕçлеççĕ. Ленинла-сталинла комсомол, большевикла партин чи çывăх та шанчăклă помощникĕ пулса тăрса, коммунизм çĕнтерĕвĕшĕн кĕрешес ĕçре малти ретре пырать.

Социализмлă промышленноçпа транспортра, колхозсен аслă уйхирĕсенче, культура фронтĕнче комсомол калама çук пархатарлă ĕçсем тăвать. Аслă Сталин вĕрентнине асра тытса, комсомолецсем хăйсем пуçарнă ĕçшĕн, вăл кирлĕ пек пулса çитичченех çине тăрса кĕрешеççĕ, йывăрлăхсенчен шиклене каялла чакмаççĕ, вĕсене пĕтĕм вăя хурса сирсе пыраççĕ. Хăйĕн чаплă примерĕпе комсомол совет çамрăкĕсене кĕрешӳре хăюллă тата чăтăмлă, хастар тата çирĕп пулма, Тăван çĕршыва вĕçĕ-хĕррисĕр юратма, Ленин—Сталин партийĕн аслă ĕçĕсемшĕн пĕтĕм пултарулăха парса кĕрешме воспитани парать. Çак ĕç питĕ хисеплĕ тата чыслă, вăл социализмлă государствăшăн çав тери пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕç пулса тăрать.

Совет çамрăкĕсене коммунистла воспитани парассине куллен лайăхлатса пыни кирлĕ. Çавна май комсомол работникĕсен ответлăхне те нумай ӳстермелле. Вĕсен, пуринчен малтан, марксистла-ленинла теорие тĕплĕ вĕренмелле, пĕтĕмĕшле пĕлĕве ӳстерсе пымалла, культурăллă тавракурăма пур енчен те пысăклатмалла. Çавăн чухне кăна комсомол работникĕсем, нумай йышлă актив çамрăксене воспитани парас ĕçе ăнăçлă туса пыма пултараççĕ.

Комсомолăн политикăллă вĕренĕвĕ лайăхланса пырать. Парти пулăшнипе темиçе вуншар пин çамрăксем большевизм теорийĕпе тата историйĕпе хĕçпăшалланаççĕ. Çапах та нумай районсенче çамрăксен политикăллă вĕренĕвне кирлĕ пек йĕркелемен. ВЛКСМ Етĕрне райкомĕ пĕр сăлтавсăрах çак вĕренӳ çулĕнче пĕлтĕрхинчен 20 политкружок сахалтарах организациленĕ. Чылай колхозсенчи комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксем ниçта та вĕренмеççĕ. Районти 47 кружокран тăваттăшĕ кăна вĕренӳ программине пурнăçласа пырать. Нумай кружоксенче занятисем ячĕшĕн çеç иртеççĕ, вĕренӳ пахалăхĕ ытла та начар. ВЛКСМ райкомĕ пропагандистсене, харпăр хăй тĕллĕн вĕренекен актива сахал пулăшать, вĕсем валли теори ыйтăвĕсем тăрăх лекцисемпе консультацисем тăтăшах ирттермест.

ВКП(б) Етĕрне райкомĕ, пуçламăш парторганизацисем комсомол организацийĕсен ĕçне куллен ертсе пынă пулсан, çавăн пек çитменлĕхсене çийĕнчех пĕтерсе пыма май пулнă. Анчах парти райкомĕ, пуçламăш парторганизацисем комсомол вĕренĕвĕпе, унăн ĕçĕпе вăхăтран вăхăта кăна интересленеççĕ.

Комсомол ĕçĕ ăнăçлă пулассии пĕтĕмпех парторганизацисем ертсе пынинчен килет. Парти ертсе пыни—комсомол пурнăçĕнче чи кирли. Партин вырăнти организацийĕсем çамрăксене коммунистла воспитани парассишĕн, комсомол организацийĕсен пĕтĕм ĕçĕшĕн ответлă пулса тăраççĕ. Парти комитечĕсем, пуçламăш парторганизацисем куллен ертсе пынă чухне кăна комсомолăн шалти пурнăçĕ, кĕрешӳри пултарулăхĕ вăйлă пулать. Ун чухне комсомол халăх хуçалăхĕн тата культура строительствин пур участокĕсенче те хăйĕн пуçарулăхне, хастарлăхĕпе пултарулăхне ытларах палăртма, çамрăксен политикăллă тата производствăллă активлăхне пĕрмай ӳстерсе пыма пултарать.

Пирĕн çамрăксем çав тери хастарлă та паттăр, савăнăçлă та пуçаруллă çынсем. Вĕсене интереслентермен ыйтусене тупма та хĕн. Вĕсем куллен çĕннине курасшăн, уп çинчен тĕплĕ пĕлесшĕн. Çавăн пек пулма совет çамрăкĕсене парти вĕрентет. Акă мĕншĕн ĕнтĕ комсомола ертсе пырас ĕçре тимлĕх пысăк пулмалла, пур чухне те юлташлăхпа кăмăллăх уççăн палăрса тăмалла. Çак енчен илсе пăхсан, Чкаловски районĕнчи «Гвардеец» колхозри пуçламăш парторганизацин опычĕ паха тĕслĕх пулса тăрать. Кунти коммунистсем комсомолецсемпе час-часах тĕл пулса калаçаççĕ, вĕсен пухăвĕсенче пулаççĕ, умра тăракан задачăсем çинчен каласа параççĕ. Парторганизаци комсомол ĕçĕ çинчен отчетсем итлет, кăтартусем парать, пуçарнă ĕçе пурнăçлама пулăшать. Парторганизаци çамрăксен политикăллă пĕлĕвне тата культурипе ӳстерме, вĕсен канăвне йĕркелеме тăрăшать. Комсомолецсем колхоз производствинче паха тĕслĕх кăтартни, вĕсем çамрăксен социализмлă ăмăртăвне пуçарса пыни, колхозăн обществăллă хуçалăхне малалла аталантарма ырми-канми ĕçлени парторганизаци тĕрĕс ертсе пынинчен килет.

Анчах комсомол ĕçĕ çинчен сайра хутра кăна аса илекен парторганизацисем те пирĕн сахал мар-ха. Ун пек чухне, паллах ĕнтĕ, комсомол организацийĕсен ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем пулаççĕ. Вăрмар районĕнчи «Родина» тата «Коммунизм» колхозсенчи комсомол организацийĕсем иртнĕ çулталăк хушшинче пĕр çамрăка та ВЛКСМ ретне илмен. Шăхасанпа Куславкка районĕсенче иртнĕ çулăн юлашки çур çулĕнче, малтанхипе танлаштарсан, хăшпĕр комсомол организацийĕсем йыш енчен чылай чакнă. Çак тĕслĕхсем акă мĕн çинчен калаççĕ: нумай комсомол организацийĕсен шалти пурнăçĕ вăйсăр, вĕсен влиянийĕ çамрăксем хушшинче пысăк мар. Ку вăл парторганизацисем комсомола куллен ертсе пыманнинчен, çамрăксене воспитани парас ĕçпе тăтăш интересленменнинчен килет.

Физкультурăпа спорт çамрăксене коммунистла воспитани парас ĕçре пысăк вырăн йышăнса тăни çинчен комсомолăн хăшпĕр работникĕсем нумай калаççĕ, анчах сахал ĕçлеççĕ. Çĕмĕрле районĕнчи колхозсенче физкультурăпа спорт ĕçне начар йĕркеленĕ. ГТО значкисчĕсене хатĕрлемелли плана çуррине те тултарман. ВКП(б) райкомĕ те физкультурăпа спорт ĕçне лайăхлатма, комсомолецсене тата союзра тăман çамрăксене çирĕп сывлăхлă, хăюллă та чăтăмлă пулма сахал пулăшать. Физкультурăпа спорт пирĕн аслă Тăван çĕршыв ывăл-хĕрĕсене кĕрешӳре паттăр пулма хăнăхтарать. Çак ĕç хамăр государствăшăн питĕ кирлĕ ĕç пулса тăрать.

Парти комитечĕсен, уйрăмах парти, профсоюз тата комсомол организацийĕсен пайĕсем, ВЛКСМ организацийĕсен паха опытне тĕпчесе вĕренсе, ăна сарса пырасси çине тимлĕ пăхмалла. Парти комитечĕсен бюровĕсенче, пленумĕсенче, парти пухăвĕсенче комсомол организацийĕсен ĕçĕсем çинчен тăтăшах сӳтсе явни, парти работникĕсем комсомол активĕпе, çамрăксемпе час-часах тĕл пулса калаçни, комсомол кадрĕсене, çамрăксене партипе правительство решенийĕсем çинчен тата умра тăракан задачăсем çинчен куллен ăнлантарса пани, — çаксем вĕсем комсомол ĕçне çӳлĕ пусăма çĕклеме пулăшмалла.

ВКП(б) Чăваш обкомĕн VIII-мĕш пленумĕ республика промышленноçне, ялхуçалăхне тата культура строительствине малалла аталантарма большевикла решени йышăнчĕ. Пленум решенийĕсем парти организацийĕсен ĕç программи пулса тăчĕç. Пленум решенийĕсене пурнăçлассишĕн кĕрешесси комсомол организацийĕсен пурнăçĕнче те тĕп вырăнта пулмалла. Парторганизацисем комсомола ертсе пырассине куллен лайăхлатса пырсан, пирĕн çамрăксем хуçалăхпа культура строительствинчи задачăсене пурнăçлас ĕçре хăйсен пултарулăхĕпе пуçарулăхне тата та ытларах палăртĕç.

Комсомол пирĕн партие совет çамрăкĕсен анлă массипе çыхăнтарса тăрать. Çакна яланах асра тытас пулать: çамрăксене коммунистла воспитани парасси—партиллĕ пысăк ĕç, комсомола ертсе пырасси — парторганизацисен кулленхи тивĕçĕ.

А. Я. Вышинский Парижран килме тухнă

ПАРИЖ, январĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). Паян каçхине ССР Союзĕн ООН Генеральнăй Ассамблейин ултăмĕш сессийĕнчи делегацийĕн пуçлăхĕ, СССР Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ А. Я. Вышинский Парижран Мускава таврăнма тухнă.

Вокзалта А. Я. Вышинские çаксем ăсатса янă: СССР делегацийĕн пуçлăхĕн заместителĕ Я. А. Малик, совет делегацийĕн членĕсем, Украина ССР, Белорус ССР, Польша тата Чехословаки делегацийĕн пуçлăхĕсемпе членĕсем, ССР Союзĕн Францири посолĕ А. П. Павлов, халăх демократи çĕршывĕсен дипломати представителĕсем, ООН секретариачĕн представителĕ, Франци ют çĕршыв ĕçĕсен министерствин представителĕ, совет делегацийĕн тата УССР-па БССР делегацийĕсен сотрудникĕсем, çавăн пекех Совет Союзĕн Францири посольствин сотрудникĕсем.

В. И. Ленина асăнса иртternĕ хурлăхлă чаплă ларусем

Совет халăхĕ хурлăхлă куна—этемлĕхĕн аслă генийĕ, коммунистсен партине тата тĕнчери пĕрремĕш советлă социализмлă государствăна туса хунă Владимир Ильич Ленин вилнĕренпе 28 çул çитнине палăртнă. Çак кун пур çĕрте те В. И. Ленина асăнса хурлăхлă-чаплă ларусем иртternĕ.

Ленинградра партипе совет, обществăллă организацисен тата Совет Çарĕн представителĕсен хурлăхлă-чаплă ларăвĕ С. М. Киров ячĕпе тăракан оперăпа балетăн академиллĕ театрĕн çуртĕнче пулнă. Ларăва ĕçсынни депутачĕсен Ленинград хула Совет исполкомĕн председателĕ Ладанов юлташ уçать. Вăл В. И. Ленина ура çине тăрса хисеплеме чĕнет. Пурте ура çине тăраççĕ. Хурлăхлă марш кĕвви янăрать. Ку кĕвĕ Совет Союзĕн Государство гимнĕн кĕввипе улшăнать.

Тăвăллă алă çупса хисеплĕ президиума ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн И. В. Сталин юлташ ертсе пыракан Политбюровне суйлаççĕ. Парти обкомĕн секретарĕ Казьмин юлташ доклад тăвать.

Ларăва пухăннисем пысăк хавхаллупа И. В. Сталин юлташ патне саламлă çыру яма йышăнаççĕ.

Хурлăхлă-чаплă лару парти гимнне «Интернационал» юрланипе хупăнать.

Киевра В. И. Ленин вилнĕренпе 28 çул çитнĕ ятпа пулнă хурлăхлă-чаплă ларăва Украина ССР Верховнăй Совет Президиумĕн председателĕ Гречуха юлташ уçнă.

«28 çул Ленинсăр, Сталин юлташ ертсе пынипе—Ленин çулĕпе» ятлă темăпа Украинăри Коммунистсен (большевиксен) Партийĕн Центральнăй Комитечĕн секретарĕ Назаренко юлташ доклад тунă.

Минскра, Белоруссин оперăпа балетăн пысăк театрне СССР Верховнăй Совечĕпе Белорус ССР Верховнăй Совечĕн депутачĕсем, Совет Союзĕн Геройĕсемпе Социализмлă Ĕç Геройĕсем, предприятисенчи, стройкăсенчи тата транспортри стахановецсем, наукăпа искусство представителĕсем, студентсем, Минск гарнизонĕнчи çар служащийĕсем пухăннă. Сцена çинче: «Ленин ялавĕ айĕнче, Сталин юлташ ертсе пынипе—малалла, коммунизм çĕнтерĕвĕ патне!» тесе чĕнекен лозунг. В. И. Ленин çинчен Белоруссири Коммунистсен (большевиксен) Партийĕн Центральнăй Комитечĕн секретарĕ Ганенко юлташ доклад тунă.

Тбилисире Грузин ССР-ĕнчи тата Тбилиси хулинчи партипе совет, обществăллă организацисен тата Совет Çарĕн представителĕсен хурлăхлă-чаплă ларăвĕ пулнă. Ларăва Руставели ячĕпе тăракан театрта ирттернĕ. Унта Грузири Коммунистсен (большевиксен) Партийĕн Центральнăй Комитечĕн пропагандăпа агитаци пайĕн заведующийĕ Наниташвили юлташ доклад тунă.

Алма-Атара партипе совет тата обществăллă организацисен хурлăхлă-чаплă ларăвĕнче Казах ССР Министрĕсен Совечĕн председателĕ Тайбеков юлташ «28 çул Ленинсăр, Сталин юлташ ертсе пынипе—Ленин çулĕпе» ятлă темăпа доклад тунă.

В. И. Ленин вилнĕренпе 28 çул çитнĕ ятпа Ташкентра пулнă хурлăхлă-чаплă ларура Узбекистанри Коммунистсен (большевиксен) Партийĕн Центральнăй Комитечĕн секретарĕ Турсунов юлташ доклад тунă.

Парти, совет, профсоюз, комсомол организацийĕсен, Совет Çарĕн представителĕсемпе тата ĕçсынисемпе пĕрле ирттернĕ, хурлăхлă-чаплă ларăвĕсем çавăн пекех Вильнюс, Рига, Таллин, Сталинабад, Баку, Ереван, Кишинев, Ашхабад, Фрунзе, Петрозаводск хулисенче тата çĕршыври крайсемпе облаçсен ытти центрĕсенче те пулнă. (ТАСС).

ХИСЕП ХĂМИ

Чăваш АССР Ялхуçалăх министерстви тата ĕçсынни депутачĕсен район Совечĕсемпе ВКП(б) райкомĕсем тăратнă тăрăх, обществăллă продуктивлă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли виçĕ çуллăх плана тултарнă, выльăх-чĕрлĕх валли лайăх çурт-йĕр тата апат çителĕклĕ хатĕрленĕ малта пыракан çак колхозсене республикăри Хисеп хăми çине кĕртнĕ:

ПĂРАЧКАВ РАЙОНĔ ТĂРĂХ

40. **Жданов ячĕпе тăракан колхоз** (председателĕ В. Т. Безруков юлташ, парторганизаци секретарĕ В. П. Юкланов юлташ, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçĕн заведующийĕ А. М. Шабанов юлташ).

41. **Молотов ячĕпе тăракан колхоз** (председателĕ А. Е. Сорокина юлташ, парторганизаци секретарĕ М. А. Орлов юлташ, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçĕн заведующийĕ В. И. Гришин юлташ).

42. **Чкалов ячĕпе тăракан колхоз** (председателĕ С. В. Рябов юлташ).

Малта пыракан трактористкăсен обязательстви

ПЕРВОМАЙСКИ. Иртнĕ ялхуçалăх çулĕнче Первомайски МТС-ĕнчи механизаторсем хушшинче уйрăмах Наталия Мефодьевăпа Мария Ахмеева трактористкăсен ячĕсем палăрчĕç.

Н. Мефодьевăпа М. Ахмеева юлташсем иртнĕ çуркунне Кубаньри паллă тракторист, Социализмлă Ĕç Геройĕ Иван Бунеев пуçарăвне хапăл туса йышăнса, тракторсемпе ытларах ĕç тăвассишĕн, горючи чылай перекетлессишĕн, ĕçĕн хăйне ларакан хакне чакарассишĕн социализмлă ăмăртăва тухрĕç.

Трактористкăсем хăйсен сăмахне чыслă пурнăçларĕç. Н. Мефодьева юлташ хăйĕн сменщикĕ П. Терентьев трактористпа пĕрле урапаллă тракторпа 932 гектар сухаланă чухлĕ ĕç туса çулталăкри плана 207 процент тултарчĕ, 615 килограмм горючи перекетлерĕ, машинăсем юсама паракан укçа-тенке гектар пуçне 8 тенкĕ те 75 пусран 2 тенкĕ те 52 пуса çити чакарчĕ. Мефодьева юлташ ĕçлекен 3-мĕш трактор бригади Карл Маркс ячĕпе тăракан колхоза вăйлă тырпул çитĕнтерме пулăшрĕ. Кунта 559 гектар çинче вăтам шутпа гектартан 16-шар центнер тĕштырă, 50 гектар çинче 23-шер центнер çурхи тулă пухса кĕртнĕ.

М. Ахмеева трактористка та ăмăртура ĕçри тусĕнчен кая юлман. Вăл та урапаллă тракторпа 910 гектар сухаланă чухлĕ ĕç туса панă, 350 килограмм горючи тата чылай укçа-тенкĕ перекетленĕ.

Ĕçре чапа тухнă трактористкăсем 1952 çулта тата та тухăçларах ĕçлеме обязательство илеççĕ. Мефодьева юлташ 950 гектартан кая мар сухалама, 800 килограмм горючи перекетлеме, хăйсем ĕçлекен Карл Маркс ячĕпе тăракан колхоз уй-хирĕсенче гектартан вăтам шутпа 17-шер центнертан кая мар тĕштырă туса илмелле тăвассишĕн сăмах пачĕ. Унăн ăмăртури тусĕ Ахмеева юлташ та урапаллă тракторпа 450 гектар вырăнне 950 гектартан кая мар сухалама обязательство илчĕ.

Паллă трактористкăсем тракторсене юсаса пĕтерне. Ăмăртури туссем, мастерскойра ответлă узелсенче ĕçлеççĕ, кулленхи ĕç нормине ирттерсе тултараççĕ.

А. ТУКМАКОВ.

Совет Союзĕ тăрăх

Дон каналне тунă çĕрте

БОЛЬШАЯ МАРТЫНОВКА (Ростов облаçĕ), январĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Дон тĕп каналне тăвас ĕç ăнăçлă пулса пырать. Цимлянски тинĕсĕнчи шыв Дон тĕп каналĕнчен шыва валеçсе тăракан каналсене кайса тăмалла пулать, вара шыв колхозсен шăвармалли участокĕсене пырать.

Дон тĕп каналĕн пĕрремĕш черетне туса пĕтернĕ. 26 километр тăршшĕ канал хатĕр.

Анатри Дон тата Азов каналĕсене тăваççĕ. Çав каналсене туса пĕтерсен Ростов облаçĕнче 100 пин гектар çĕре шăварса тăма май пулать.

Халĕ утакан экскаваторсемпе Дон тĕп каналĕн иккĕмĕш черетне чăвнă çĕрте ĕçлеççĕ. Мартыновски район территорийĕнче туннель тăваççĕ. Кунта та строительсем пысăк çĕкленӳпе ĕçлеççĕ.

Çурçĕр енчен килекен канала туннель патне чавса çитернĕ. Кунта кашни ăсмассерен 14 кубометр çĕр чавса кăларакан экскаваторпа ĕçлеççĕ.

Преми-надбавка миллиард тенкĕ ытла тӳленĕ

Украина ССР-ĕнчи сахăр промышленноçĕн тĕп управленийĕ колхозсене 1951 çулта сахăр кăшманĕ панăшăн укçа тӳленин малтанхи итогĕсене тунă.

Иртнĕ çулта Украинăра пысăк тухăçлă сахăр кăшманĕ туса илнĕ. Колхозсене сахăр кăшманĕ планран ирттерсе панăшăн преми-надбавка 1.153 миллион тенкĕ тӳленĕ. Ку вăл 1950 çулхинчен 300 миллион тенкĕ ытларах пулать. Кунсăр пуçне, колхозсем йӳнĕ хакпа 8,5 миллион пăт сахăр илеççĕ.

Винница облаçĕнчи колхозсем премипе надбавка шучĕпе 270 миллион тенке яхăн укçа илнĕ.

Украинăн хĕвелапăç енчи облаçĕсенчи çамрăк колхозсем те пысăк çитĕнӳ тунă. Вĕсен счечĕсем çине государство 180 миллион тенкĕ укçа куçарса панă. (ТАСС).

Мускаври И. В. Сталин ячĕпе тăракан автозаводра ĕçлекен çамрăк рабочисемпе специалистсем кашни япалана тунă чухне металл перекетлессишĕн социализмлă ăмăрту пуçарса янă. Çак ăмăртăва çĕршыври мĕнпур заводсенче ĕçлекенсем хутшăнаççĕ.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: слесарьсен бригадирĕ И. М. Глазков комсомолец (сылтăмри) автозаводри рабочисене, технологсене, конструкторсене, комсомолецсемпе ытти çамрăк рабочисене металл перекетлессишĕн социализмлă ăмăртăва хутшăнма чĕнсе калани çине алă пусать.

В. ЗУНИН фотоӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Вăрманти çимĕç йывăççисене сыпса ӳстереççĕ

Краснодар крайĕнче, Кабардин тата Çурçĕр-Осетин АССР-ĕсенче улмуççи, груша тата алыча йывăççисем питĕ нумай ӳсекен чăтлăх вăрмансем пур. Çавăн пек вăрмансем 100 пин гектар ытла шутланаççĕ. Анчах вăрманти йывăççен çимĕçĕсем йӳçĕ-кăвасак пулаççĕ. Çурçĕр Кавказри садовод-мичуринецсем вăрманти çимĕç йывăççисем пылак çимĕçсем—пан улми, груша тата слива памалла тăвас тесе тăрăшаççĕ. Çак ĕçе тунипе çĕршыва çулленех çĕршер миллион килограмм паха çимĕçсем туса пама пулать.

Мичуринецсен паха пуçарăвне халĕ ĕнтĕ пурнăçлама тытăннă. Кабардин АССР-ĕнче вăрманта ӳсекен 60 пин йывăçа сыпнă, сыпма чи лайăх сортлă улмуççи, груша тата слива йывăççисен турачĕсене илнĕ.

Кабардин АССР-ĕнчи çимĕç йывăççисем ӳстерес тĕлĕшпе ĕçлекен станци директорĕ Н. В. Гаврилов юлташ ТАСС корреспондентне вăрманти çимĕç йывăççисене мĕнле сыпса ӳстерни çинчен каласа панă.

Вăрманти çимĕç йывăççисене тункатине пĕр метр çӳллĕш хăварса касаççĕ. Вара тунката çине, йывăç тачкăшне кура, 4—5 е 6 турат сыпса лартаççĕ. Сыпнă хыççăн тăватă çул иртнĕ тĕле тĕреклĕ йывăççем ӳссе çатĕнеççĕ. Çав йывăççем тутлă çимĕç нумай пăраççĕ. Вĕсем нумай çул хушши ӳсме тата çимĕç пама пултараççĕ. Кăнтăр енчи садсенче ӳстерекен улмуççисем аллă çула яхăн, хăшпĕр сортсем, сăмахран, «Ренет-шампански» сорт, вăтăр çул çеç пурăнаççĕ. Вăрманти çимĕç йывăççисене сыпса, нумай çул хушши ӳсекен тата çимĕç паракан садсем тума пулать.

(ТАСС).

В. И. Ленин произведенийĕсене молдаванла пичетлесе кăларнă

КИШИНЕВ, январĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Молдаван ССР-ĕнчи государство издательстви В. И. Ленинăн суйласа илнĕ произведенийĕсен икĕ томĕн пĕрремĕш томне молдаван чĕлхипе пичетлесе кăларнă.

Кĕнекене вырăсларан Молдаври Коммунистсен (большевиксен) Партийĕн Центральнăй Комитечĕн парти истори институчĕ—ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ çумĕнчи Маркс—Энгельс—Ленин институчĕн филиалĕ—куçарса хатĕрленĕ.

Çĕршывăн кăнтăр енчи районĕсенче

Уй-хир ĕçĕсем сарăлса пыраççĕ

АШХАБАД. Туркменири колхозсен уй-хирĕсенче, пахчасенче, садсемпе виноградниксенче çуркуннехи ĕçсем сарăлса пыраççĕ. Пур çĕрте те çĕр мамăкĕ, люцерна тата пахча çимĕçĕсем акмалли вырăнсене сухалаççĕ. Садсемпе виноградниксенче çĕре кăпкалатаççĕ. Çимĕç йывăççисемпе ытти тĕрлĕрен йывăççем лартма çĕре çемçетсе хатĕрлеççĕ.

Ашхабад облаçĕнче тĕштырăсем акаççĕ. Теджен оазисĕнче фермăсем çумĕнчи участоксем çине урпа акма пуçланă.

Парниксене пахча çимĕçсем акаççĕ.

КИШИНЕВ. Молдавире çанталăк лайăх тăрать. Колхозсем уй-хир ĕçĕсене тума тытăннă. Кангазски МТС-ĕнчи механизаторсем пĕр çул ӳсекен курăксем акмалли вырăнсене сухалаççĕ, ирхи çĕртме тăваççĕ. Тырновски МТС-ĕнчи трактористсем çимĕç йывăççисем лартмалли вырăнсенче çĕре çемçетеççĕ. Дубоссарски тата Леовски районсенчи колхозсем выльăхсене çулса çитерме хĕвелçаврăнăш акма тытăннă.

Кĕрхи тырăсен калчи лайăх хĕл каçнă. Республикăри колхозниксем тулăпа ырашă калчине апат параççĕ. Кăнтăр енчи районсенче калчана апат пама ялхуçалăх авиацийĕн самолечĕсем тухса кайнă.

Январĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС).

Кĕскен

★ Январĕн 23-мĕшĕнче Алма-Атари механически завод Туркменири тĕп канал строителĕсем валли лентăллă тăватă конвейер ярса панă. Çак конвейерсемпе строительство ĕçĕсене механизацилеççĕ.

★ Кишиневри С. Лазо ячĕпе тăракан атă-пушмак фабрикинче çĕнĕ цех ĕçлеме пуçланă. Çак цехра ĕçлекенсем малтанхи кунсенчех ача-пăча валли пиншер мăшăр атă-пушмак туса кăларнă.

★ Таджик ССР-ĕнчи вăрман питомникĕсем çуркунне колхозсемпе совхозсене, çавăн пекех хуласемпе район центрĕсенче лартма 12 миллион çамрăк йывăç ӳстерсе хатĕрленĕ. (ТАСС).

Çуракине большевикла хатĕрленер!

Çĕрпӳ МТС-ĕнче тракторсене лайăх юсамаççĕ

Çĕрпӳ МТС-ĕ иртнĕ кĕркунне тракторсене юсама питтĕ кая юлса пуçăнчĕ. Октябрь тата ноябрĕн çур уйăхне МТС руководителĕсем юсав ĕçĕсене мĕнле меслетпе организацилесси пирки тавлашса ирттерчĕç. Чăваш АССР Ялхуçалăх министерстви темиçе хутчен асăрхаттарсан тин, юсав ĕçĕсене узловой меслетпе йĕркелеме «калаçса татăлаççĕ».

МТС машинăсене юсама тĕплĕ хатĕрленсе çитменни малтанхи кунсенчех палăрчĕ. Узелсене ертсе пыма ответлă çынсем уйăрман, вĕсенче камсем ĕçлемеллине те кăтартман. Чылай трактористсем халĕ те хăш узелта ĕçлемеллине, мĕн тумаллине пĕлмеççĕ.

Мастерскойра 13 узел тунă. Январĕн 9-мĕшĕнче кунта пурĕ те 12 çын кăна ĕçленĕ. Кашни узела пĕрер çын та тивмест.

— Ирхине 23 çын ĕçе тухнăччĕ. Кăнтăрла иртсен вĕсенчен чылайăшĕ никамран ыйтмасăрах пăрахса кайнă,—тет МТС директорĕн политика енĕпе ĕçлекен заместителĕ Семенов юлташ.

Кунта ĕç дисциплинине çирĕплетессишĕн сахал тăрăшаççĕ. Юсав ĕçĕсем пуçланнăранпа ĕçе тухса курман трактористсем те сахал мар. Апла пулин те вĕсене МТС-а чĕнсе илсе калаçман. Уйрăм бригадирсем халĕ те узловой меслете хакламаççĕ. Трактор бригадин бригадирĕ Захаров юлташ хăй бригадине çирĕплетсе панă 2 трактора юсанă чухне ĕçе çӳренĕ. Урăх бригадăри тракторсене юсама тытăнсан, Захаров хăй те, трактористсем те киле пăрахса кайнă. Узелсенче ĕçлекен механизаторсем тăтăшах улшăнса тăнă пирки ĕçре брак нумай пулать. Контролер-механик И. Гурьев юлташ узелсен ĕçĕсене çителĕксĕр тĕрĕслет.

Пĕр СХТЗ трактор патĕнче 3 тракторист тĕрмешеççĕ.

— Тарăхас килет, — тет трактор бригадин бригадирĕ Д. Кириллов юлташ.— Ку трактора юсавран тухнă тесе йышăннă. Ĕçлеттерсе пăхрăмăр та мотора тепĕр хут кăларса сӳтмелле пулчĕ. Мотор пухакансем маслоотражателе тĕрĕс мар вырнаçтарнă. Маховикпа вентилятора та урăх тракторĕнне лартса панă.

Кунта ун пек тĕслĕхсем сахал мар.

— Мана çирĕплетсе панă трактора юсавран тухнă тесе актпа йышăннăччĕ,—тет Шишкин тракторист.—Гаража та çитереймерĕм, мотортан çу пĕрĕхсех юхма тытăнчĕ. Мотор пухакан узелта ĕçлекенсем кивĕ прокладка лартса янă. Çĕнĕрен юсама тиврĕ.

Январĕн 9-мĕшĕнче «У—2» тракторăн радиаторне тепĕр хут сӳтсе юсарĕç. Ăна трактор çине тĕрĕслемесĕрех вырнаçтарса лартнă иккен. Ĕçлеттерсе пăхсан тин радиатортан шыв юхни палăрнă.

Двигатель ваннă пирки темиçе кун ĕнтĕ токарнăй цех ĕçлемест. Двигателе хăçан юсаса ĕçе яраççи паллă мар.

МТС-ра кивĕ пайсене юсаса çĕнетес тĕлĕшпе нимĕн те тумаççĕ тесен те тĕрĕс пулать. Токарнăй станоксем ĕçлемесен, кивĕ пайсене юсама йывăр. Ытларах çĕнĕ пайсем илсе килессе шанса тăраççĕ.

МТС-ри пуçламăш парторганизацин çак кунсенче пулса иртнĕ отчетпа суйлав пухăвĕнче чылай коммунистсем Коночкин аслă механикпа мастерской заведующийĕ Яковлев тракторсен запаслă пайĕсене салатса пĕтерни çинчен каларĕç.

Аслă механик Коночкин тракторосбытран илнĕ 99-мĕшпе 98-мĕш номерлĕ детальсене пытарса хăварни çинчен ВКП(б) райкомĕнче те пĕлеççĕ. «Большевик» колхозăн ГЭС-не юсанă чухне трактор пайĕсемпе усă курни тата ытти детальсем çухални çинчен МТС директорĕ те пĕлет. Анчах та МТС пурлăхне сăтăр тăвакансен юрăхсăр ĕçĕсене халиччен те тăрă шыв çине кăларманни тӳрĕ кăмăллă механизаторсене тарăхтарать.

Юсав ĕçĕсем пуçланиччен МТС-а запаслă пайсем чылай кӳрсе килнĕ. Апла пулин те МТС тракторсем юсамалли плана висĕ пайран пĕр пайне те тултарман. Ялхуçалăх машинисене (висĕ самоходнăй комбайнсăр пуçне) юсама тытăнман.

Механизаторсен социализмлă ăмăртăвне тивĕçлипе ертсе пымаççĕ. Юсав ĕçĕсем пуçланнăранпа обязательствăсене мĕнле пурнăçласа пынине пĕрре те тĕрĕслемен.

Парторганизаци, МТС директорĕн политика енĕпе ĕçлекен заместителĕ Семенов юлташ механизаторсем хушшинче политикăллă-массăллă ĕçсене кирлĕ пек йĕркелемен.

Мастерскойĕнче механизаторсене ĕçлеме кирлĕ условисем туса паман. Мастерскойĕнче тăвăр, тирпейсĕр. Узелсем вырнаçнă пӳлĕмсенче кирлĕ мар тимĕр-тăмăр, трактор пайĕсем, пушă ещĕксем купаланса выртаççĕ.

Юсав ĕçĕсене мĕнпур трактористсене, механиксене хутшăнтармалла. Парторганизацин механизаторсене ĕçре ӳсĕмсем тума хавхалантарса пымалла. Уй-хир ĕçĕсем пуçланиччен МТС паркне тĕплĕ хатĕрлесе çитерессишĕн пĕтĕм вăя мобилизацилемелле.

А. АЛЕКСАНДРОВ.
(Хамăр корр.).

Большевиксен партийĕпе Совет государствин паллă деятелĕ

(В. В. Куйбышев вилнĕренпе 17 çул çитнĕ май)

Вунçичĕ çул каялла, 1935 çулхи январĕн 25-мĕшĕнче, пролетариллĕ хастарлă революционерăн, большевиксен партийĕпе Совет государствин паллă деятелĕн Валериан Владимирович Куйбышевăн чĕри тапма чарăннă. Вăл парти хушнă пысăк ĕçе туса пынă вăхăтра вилнĕ, ăна ют çĕршыв разведкисем тара тытнă агентсем—троцкистла-бухаринла шпионсемпе çынвĕлерсенсем тискеррĕн вĕлернĕ.

В. В. Куйбышев пролетариллĕ революционерсен паттăр ăрăвĕнчи, Ленинпа Сталин ертсе пынипе революциллĕ кĕрешӳĕн вут-кĕмĕнче большевиксен партине туса пынă, халăх ирĕклĕхĕпе телейĕшĕн хастарлă кĕрешнĕ тата пирĕн çĕршыври ĕççыннисене социализм çĕнтерĕвĕ патне илсе çитернĕ ăрури деятель пулнă.

Валериан Владимирович вунултă çула çитсен, 1904 çулта, большевиксен Омск хулинчи организацийĕн ретне кĕнĕ.

Хăйĕн ăнланулă пĕтĕм пурнăçне вăл Ленинпа Сталинăн аслă ĕçĕшĕн, коммунизм çĕнтерĕвĕшĕн кĕрешме панă.

В. В. Куйбышев большевиксен парти ĕçне Петербургра, Омскра, Каинскра, Барабинскра, Томскра, Петропавловскра, Тайга станцийĕнче туса пынă. Пур çĕртре те вăл большевикла организатор, Ленинпа Сталинăн аслă идейисене, пролетариллĕ революци идейисене саракан хĕрӳллĕ пропагандист пулнă.

Куйбышев юлташ большевиксен партийĕн ретĕнче 30 çул хушши активлă ĕçленĕ. Çав шутра вăл революциллĕ ĕçе вăрттăн туса пынă вăхăтра, йывăр условисенче 12 çул хушши парти ĕçне активлă туса пынă. Пролетариллĕ хастарлă революционера патша охранки хытă хĕсĕрленĕ. 1906 çултан пуçласа 1916 çула çитиччен В. В. Куйбышева сакăр хутчен арестленĕ, виçĕ хут суд тунă, тăватă хутчен ссылкăна янă. Питĕ йывăр пурнăç та, хăрушлăх та хĕрӳллĕ большевикăн çирĕп шухăш-кăмăлне хуçма пултараймаи. Тĕрмере те, Çĕпĕрти ссылкăра та Куйбышев яланхи пекех çирĕп большевик-ленинец пулнипе палăрса тăнă. Тĕрмере чухне те вăл вĕренме пăрахман, нумай вуланă, сывăхарса килекен революциллĕ çапăçусенче кĕрешме вĕренсе пынă. Нарымра ссылкăра пурăннă чухне Куйбышев юлташ Свердловпа пĕрле ссылкăри большевиксене тачă пĕтĕçтернĕ, парти шкулĕ, библиотека, пĕр-пĕрне пулăшмалли касса организациленĕ. Иркутск кĕпĕрнинче (Тутуры ялĕ) ссылкăра пурăннă чухне вăл çывăхри ялсенче пурăнакан ссыльнăйсен конференцине пухнă, марксистла кружоксем тунă, вырăнти хресченсем хушшинче пропаганда ĕçне туса пынă. Паттăр революционер кирек мĕнле условисенче те хастарлă ĕçленĕ, вăл пĕр минутлăха та ĕçлеме чарăнман.

Юлашки ссылкăран Валериан Владимировича Февральти революци хăтарнă. Вăл Самар хулине кайнă, унта Совет влаçĕшĕн кĕрешес ĕçе ертсе пынă.

Октябрьти Социализмлă Аслă революци çĕнтернĕ хыççăн В. В. Куйбышев Хĕрлĕ Çар тунă çĕрте активлă ĕçлет.

Парти Валериан Владимировича çарти ответлă вырăнсенче ĕçлеттерет, ăна граждан вăрçин пысăк пĕлтерĕшлĕ фрончĕсене ярать. Куйбышев юлташ пур çĕрте те пысăк çитĕнӳсем тума тăрăшса, большевиксен партийĕн заданийĕсене чыслă пурнăçлать.

Фрунзепе Куйбышев юлташсем ертсе пынă Хĕрлĕ Çар чаçĕсем Колчак Çарне аркатса тăкнă. Киров юлташпа пĕрле В. В. Куйбышев Астрахане тăшмансенчен хӳтĕлес ĕçе ертсе пынă. Вăл Вăтам Азие тăшмансенчен тасатма тата Совет влаçне тĕреклетме пулăшнă, унта пысăк ĕç тунă.

Пирĕн çĕршывра социализм тăвас ĕçре тунă историллĕ çĕнтерӳсем Куйбышев ячĕпе тачă çыхăнса тăраççĕ.

Ф. Э. Дзержинский вилнĕ хыççăн, парти В. В. Куйбышева СССР Халăх хуçалăхĕн Аслă Советне ертсе пыма уйăрнă. 1930 çулта ăна Госплан председателĕ тата СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председатель заместителĕ пулма уйăрса лартнă. Социализмлă экономика тунă çĕрте Куйбышев пысăк талантлă организатор пулни, унăн хĕрӳллĕ хастарлăхĕ, большевикла тимлĕхĕ çĕнĕрен палăрнă. Вăл сталинла пĕрремĕш пилĕк çуллăх планпа иккĕмĕш пилĕк çуллăх плана хатĕрлес тата çав плансене пурнăçлас ĕçе тӳрремĕнех хутшăнна. Вăл

Сталинăн çĕршыва индустриализацилемелли тата ялхуçалăхне коллективизацилемелли гениллĕ программине, пирĕн çĕршыва малта пыракан, индустриллĕ-колхозлă социализмлă держава туса хумалли программăна пурнăçлама хăйĕн пĕтĕм вăйхăватне тата пĕтĕм хастарлăхне парса тăрăшнă. Питĕ пысăк заводсем, фабрикăсем, электростанцисем лартни, шахтăсем туни, социализмлă хăватлă индустри туса хуни В. В. Куйбышев ячĕпе çыхăнса тăрать.

Куйбышев юлташ сталинла пилĕкçуллăхсен пысăк планĕсене пурнăçлас ĕçре чи кирлĕ условисенчен пĕри вăл массăсен ĕçри хастарлăхне çĕклени, ĕççыннисен творчествăллă пуçарулăхне пур майсемпе те аталантарса пыни пулать, тесе шутланă. «Вуншар миллион çынсен ирĕкне тата ĕçченлĕхне пĕтĕçтерни—пире çĕнтерӳ тума май паракан чи лайăх шанчăк!»—тенĕ В. В. Куйбышев партин XVII-мĕш съезĕнче тунă докладра.

Куйбышев юлташăн пĕтĕм ĕçĕ большевикла партилĕхе çирĕп пурнăçласа пыни, коммунизм ĕçĕ çĕнтересси не çирĕп ĕненсе ĕçлени, большевиксен партине тата аслă Сталина чунтан-чĕререн парăнса ĕçлени пулнă. Партин XVII-мĕш съезĕнче халăх хуçалăхне аталантармалли иккĕмĕш пилĕк çуллăх план çинчен доклад туса, Куйбышев юлташ пирĕн ĕмĕр питĕ чаплă ĕмĕр пулни çинчен, социализмăн аслă çĕнтерӳвĕсен организаторĕ Сталин юлташ малашлăха витĕр курса тăни çинчен питĕ хавасланса каланă.

«Иккĕмĕш пилĕк çуллăх программи вăл—ленинла идейăсен чаплă çĕнтерĕвĕн аслă программи, социализм малалла ӳссе пымалли программа,—тенĕ Куйбышев юлташ.—Çак программăна пурнăçлани пĕтĕм тĕнче историйĕнчи пысăк пĕлтерĕшлĕ событи пулать, ку программăшăн пирĕн кĕрешӳри мĕнпур чаплă ĕçсемшĕн Сталин юлташа тав тумалла. Аслă çулпуç ертсе пынипе иккĕмĕш пилĕкçуллăхра социализм тумалли питĕ чаплă программа çуралчĕ. Сталин юлташ ертсе пынипе çак программа пурнăçланĕ».

Ленинпа Сталинăн шанчăклă ученикĕ тата соратникĕ, коммунизм ĕçне чун-чĕререн парăннă В. В. Куйбышев партипе халăхăн тăшманĕсене хирĕç, троцкистла-зиновьевла, бухаринла тата ытти сутăнчăксене хирĕç, пирĕн çĕршывра социализм тăвассине чарса лартма хăтланнă тăшмансене хирĕç нимĕн хĕрхенмесĕр кĕрешнĕ. Вăл парти пĕрлĕхне çирĕплетессишĕн, ăна Ленинпа Сталинăн никам çĕнтереймн ялавĕ тавра тачă пĕтĕçтерессишĕн ывăнма пĕлмесĕр кĕрешнĕ. Партин ленинла-сталинла сăнарлă деятелĕн тĕп паллисем çаксем пулаççĕ: большевикла çирĕп принциплăх, партин тĕп çул-йĕрĕнчен пăрăнакансене, кирек мĕнле сулăнчăксене хирĕç те нимĕн хĕрхенмесĕр кĕрешесси, социализм тăшманĕсене чун-чĕререн кураймании. Çак пахалăхсем В. В. Куйбышевăн уйрăмах вăл ЦКК-РКИ руководителĕ пулса ĕçленĕ вăхăтра палăрнă. Троцкистла-зиновьевла тата бухаринла ирсĕрсене, пур йышши оппортунистсене те, татăклăн тата пĕр хĕрхенмесĕр аркатса тăкса, В. В. Куйбышев çав вăхăтрах тӳрĕ кăмăллă совет çыннисене чунтан хисепленĕ, вĕсемшĕн тăрăшнă, вĕсен ыйтăвĕсене тĕплĕ пăхса тухса татса панă.

В. В. Куйбышев большевиксен партийĕн Сталин юлташ ертсе пыракан руководителĕсен йышĕнче тăнă. Ленин вилнĕ хыççăн большевиксен партийĕн çак ертсе пыракан чăмăрĕ, Сталин юлташ ертсе пынипе, ленинизмăн никам çĕнтереймн ялавне сыхласа хăварчĕ, пирĕн çĕршыва социализм строительствин анлă çулĕ çине илсе тухрĕ.

Партин X-мĕш съезĕнче В. В. Куйбышева Центральнăй комитет членĕн кандидатне, XI-мĕш съездра — партин Центральнăй Комитечĕн членне суйланă. ЦКК-РКИ тунă хыççăн, ăна ертсе пыма парти Куйбышев юлташа уйăрса лартнă. 1927 çулхи декабрьте ăна ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн Политбюро членне суйланă.

В. В. Куйбышев çирĕп большевик, коммунизмшăн кĕрешекен хĕрӳллĕ çын, пролетариллĕ революционерăн ырă тĕслĕхĕ, Ленинпа Сталинăн аслă партийĕн шанчăклă ывăлĕ пулнă.

В. В. Куйбышева пытарнă чухне пулнă митингра Молотов юлташ ун çинчен çапла каланă:

«Вăл питĕ пысăк ĕçе нихçан та мăнкăмăлланмасăр туса пычĕ, пĕчĕк ĕçсене тунă чухне те, пысăк ĕçсене тунă чухне те, яланах социализмăн тĕп интересĕсене ăнланса ĕçлерĕ... Партипе государство хушнă ĕçсене вăл мĕнле туса пыни пирĕншĕн яланах умра тăракан ĕçе вăя шеллемесĕр, революциллĕ хастарлăхпа тата большевикла хăватпа туса пынин тĕслĕхĕ пулса тăрĕ».

Валериан Владимирович Куйбышевăн чаплă пурнăçĕ, пĕтĕмпех Ленинпа Сталинăн аслă ĕçне туса тăма панă пурнăç, пирĕн çĕршыври миллионшар ĕççыннисемшĕн коммунизм çĕнтерессишĕн кĕрешес ĕçре хавхалантаракан ырă тĕслĕх пулса тăрать.

Вырăнти удобренисене ытларах хатĕрлемелле

ПЕРВОМАЙСКИ. Районти колхозсенче иртнĕ ялхуçалăх çулĕн итогĕсене туса çитереççĕ, отчетпа суйлав тата отчетлă пухусем пуçланаççĕ. Вăйлă тырпул ăстисен çитĕнĕвĕ колхоз хресченĕсене савăнтарать. Уйрăм колхозсем тата вуншар уй-хир бригадисем пысăк çĕр лаптăкĕ çинче кашни гектартан вăтам шутпа 120—150-шар пăт е ытларах тĕштырă пухса кĕртрĕç. Пысăк тухăçлă тырпула мĕнле майпа туса илни çинчен ыйтсан, вĕсенчен чылайăшĕ çапла ответлеççĕ:

— Çĕрĕç механизаторĕсем лайăх ĕçленипе пĕрлех эпир удобренисемпе нумай усă курма, ялхуçалăх культурисене ӳсме мĕн кирлине ытларах пама тăрăшрăмăр.

Малта пыракан Карл Маркс ячĕпе тăракан, «Красная поляна», «Путь социализма» тата «Комсомолец» колхозсен юлашки çулсенчи опычĕ те çавна лайăх çирĕплетсе парĕ. Асăннă колхозсем çултан-çул вырăнти удобренисемпе ытларах усă кураççĕ. Анчах та, Первомайски районĕнчи пур колхозсем те вырăнти удобренисене хака хураççĕ теме çук-ха.

Кунта темиçе çул хушши ĕнтĕ çакăн пек йăла тăсăлса пырать: районти ялхуçалăх пайĕ вырăнти удобренисем хатĕрлеме кашни колхозах план парать, анчах та çирĕп тĕрĕслӳ пулманнипе çав плансем тăтăшах хут çинче тăрса юлаççĕ. Кăçал та çавăн пек пулассин куç умĕнчех.

Вырăнти удобренисене хакламанни мĕн пек сиен кӳнине çак цифрăсем те лайăх кăтартса параççĕ. Кунти условисенче уйхире пĕр тонна паха тислĕк тăкни тырпул тухăçлăхне гектар пуçне вăтам шутпа 3 пăт ӳстерет. Колхозсем пĕлтĕр уйхире 37 пин тонна тислĕкпе торф кăлармасăр хăварнă, çакă вăл сахалтан та çĕр пин пăта яхăн тырă çухатни пулать. Халĕ, çĕрĕç механизацийĕ темиçе хут ӳснĕ хыççăн, çав çухатусенчен хăтăлмалли майсем кашни колхозрах пур-çке!

Колхоз председателĕсенчен чылайăшĕ вырăнти удобренисем турттарма туртăм вăйĕ çитменни çине йăвантарма пăхаççĕ. Анчах çакăн пек сăлтавпа виепле те килĕшме çук. Вăтамран шутласан та районти колхозсем тислĕкпе торф турттарма 400-тен кая мар ĕç вылььăхĕ уйăрма пултараççĕ. Çапла пĕр уйăх хушшинче çакăн чухлĕ туртăм вăйĕпе 12 пин тоннăран кая мар вырăнти удобрени кăлларма пулать. Ялхуçалăх пайĕ колхозсене план ярса панă чух çав майсене шута илнĕ те ĕнтĕ. Кирлĕ-кирлĕ мар сăлтав çине йăвантарни ĕçре пысăк чăрмав кӳнине çак тĕслĕхсем лайăх кăтартса параççĕ.

«Большевик» колхоз 2.237 тоннăран 270 тонна тислĕк турттарнă пек шутлать. Анчах ку вăл конюхсем витесене тасатнă хыççăн 60—70 метра турттарса тăкнă тислĕк купиcем çеç. Колхозри 4 уй-хир бригадинчен пĕринче те тислĕк турттарма туртăм вăйĕ уйăрман. Правлени председателĕ М. Мылов юлташ вырăнти удобренисем кăлармалли график тăвасси çинчен шухăшласа та пăхман.

Витесем хыçне кăларса тăкнă тислĕке кăна уй-хире турттарнă тесе сведени паракансем ытти хăшпĕр колхозсенче те пур. «Красная Чувашия», Ворошилов ячĕпе, Молотов ячĕпе тăракан колхозсен хирĕсенче агротехника хушнă пек купаласа хунă тислĕк купиcене пачах та курма çук, çав вăхăтрах колхоз правленийĕсем çĕршер лав тислĕк турттарни çинчен суя сведенисем параççĕ.

Тислĕкпе торф хатĕрлес ĕçе хăвăртлатма чăрмантаракан сăлтав туртăм вăйĕ çитменнинче мар. Кунта, чи малтан, çав ĕç хăйне-хăй пулассa шанни сисĕнет. Ленин ячĕпе тăракан колхоз правленийĕ кашни шăматкунах мĕнпур туртăм вăйĕпе тислĕк турттарма йышăннă. Унтанпа нумай шăматкунсем иртрĕç ĕнтĕ, анчах колхоз правленийĕ хăйĕн решенине пурнăçлас тĕлĕшпе нимех те туман.

1950—1951 çулсенчех «Красная поляна» колхоз тислĕке уй-хире тракторпа турттарни нумай çăмăллăх кӳнине кăтартса пачĕ. Кăçал машина-трактор станцин колхозсенче тислĕкпе торф турттарма 8 трактор уйăрса пама пултарать, вĕсемпе пĕр кун хушшинче 300 тонна ытла тислĕк турттарма пулĕччĕ. Хальхи вăхăтра пĕр тракторпа те усă курмаççĕ-ха. МТС дирекцийĕ çунасем çукки çине, колхоз правленийĕсем çуна тума материалсем çукки çине йăвантараççĕ. Çунасем тума нумай материал кирлĕ мар ĕнтĕ, кунта тырпулшăн большевикла кĕрешме хатĕр пулни çеç кирлĕ. МТС дирекцийĕ вырăнти удобренисем хатĕрлес ĕçе хăй те иккĕмĕш вырăна хуни курăнать, колхоз правленийĕсене тракторсене ĕçлеттерме кирлĕ условисем тума хистени сисĕнмест.

Вырăнти удобренисемпе туллин усă курни ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне ӳстерес тĕлĕшпе питех те пысăк вырăн йышăнать. Тислĕкпе торф тата ытти удобренисем хатĕрлемелли тата турттармалли плана кашни колхозрах тултарса çитермелле. Çак ответлă ĕçе тĕрĕслесе тăрас тĕлĕшпе районти ялхуçалăх пайĕн те оперативлăха ӳстермелле.

«Чăваш Коммуни» хаçат бригади:
И. МИХАЙЛОВ,
А. ТУКМАКОВ, Н. ВОЛКОВ.

Пуçламăш парторганизацисен ĕç опытĕнчен

Ĕçри çитĕнӳсем—активпа тачă çыхăнса ĕçленинче

ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ тата аслă çулпуçăмăр Сталин юлташ парти организацийĕсене массăсемпе анлă çыхăну тытма, çав çыхăнусене яланах тĕреклетсе пыма, массăсен сассине итлеме тата вĕсене хумхантаракан ыйтусене пĕлсе тăма, массăсене вĕрентме çеç мар, тата массăсенчен вĕренме те хатĕр тăма кирлине пĕрмаях асăрхаттарса тăраççĕ.

Çакна правило вырăннех йышăнма юрать,—тет Сталин юлташ: большевиксем халăхăн йышлă массисемпе çыхăну тытса тăнă чух вĕсене никам та çĕнтерес çук. Тата та, тепĕр майлă та, большевиксем массăсенчен уйрăлса кайса вĕсемпе çыхăну çухатсанах, вĕсем бюрократла тутăхпа витĕнсенех, вĕсем ним вăйсăр тăрса юлĕç те, пуш япала пулса кайĕç.

Активсăр пирĕн парти малалла аталанса пыраймав пулĕччĕ. Парти тавра партире тăманнисен активĕн анлă сийĕ пĕтĕçсе тăрать пулсан, парти ӳсет тата тĕреклenet. Çавăн пек актив çук пулсан, парти пишерленсе тата хавшаса пырать.

Çулпуçăн çак сăмахĕсене Муркаш районĕнчи Энгельс ячĕпе тăракан колхозри коммунистсем яланах асра тытса тăраççĕ, пур чухне те партире тăман активпа, массăпа тачă çыхăнса ĕçлеççĕ. Актив çине таянса ĕçлени парторганизацие колхозниксен творчествăллă активлăхне пĕрмаях ӳстерсе пыма, артелĕн обществăллă хуçалăхне малалла аталантарас тĕлĕшпе умра тăракан пысăк задачăсене ăнăçлă татса пама пулăшать.

Çак колхозра парторганизацие кулленхи ĕçре ялан пулăшса пыракан активистсем 50 çын ытла шутланать. Вĕсем хушшинче—колхоз производствинче малта пыракансем, правленипе ревизи комиссийĕн членĕсем, бригадирсем, вылььăх-чĕрлĕх работникĕсем, строительсем, рационализаторсем, ял Совечĕн депутачĕсем, ялти учительсем.

Актива хăйĕн тавра тачă пĕтĕçтерес тата ăна воспитани парас ĕçре парторганизаци мĕнпур фермăсемпе туллин усă курма тăрăшать. Кунта кашни икĕ уйăхрах партин усă пухăвĕсем пулса иртеççĕ, вĕсенче партипе правительство решенийĕсене тата колхозниксен анлă массисене хумхантаракан, колхоз производствинчи чи кирлĕ ыйтусене сӳтсе яваççĕ.

Партбюро партин усă пухăвĕсене иртерме тĕплĕн хатĕрленет, вĕсенче мĕнле ыйтусем сӳтсеявмаллине малтанах ĕç планĕнче палăртса хурать, пуху хăçан пулассии çинчен актива вăхăтра пĕлтерет. Çакă вăл активистсене кун йĕрвинчи ыйтусене сӳтсе явас ĕçе активлă хутшăнма, кирлĕ сĕнӳсем хатĕрлеме май парать.

Усă пухусем иртернисĕр пуçне партбюро час-часах актива пухса канашлусем иртерет. Çакăн пек канашлусенче колхоз умра тăракан хуçалăхпа политикăллă задачăсене мĕнле пурнăçласа пыни çинчен сӳтсе яваççĕ, ялхуçалăх артелĕн Уставĕпе колхоз строительствин ыйтăвĕсем тăрăх тата тĕнчери лару-тăру çинчен политикăллă докладсем иртереççĕ.

Кунсăр пуçне партбюро вăхăтран вăхăта колхоз производствин уйрăм участокĕсенче ĕçлекен работниксен—бригадирсен, фермăра ĕçлекенсен тата строительсен, ватă колхозниксен производствăллă канашлăвĕсене иртерет, ĕçри ситменлĕхсене пĕтерме тивĕçлĕ кăтартусем парать.

Парторганизаци уйрăмах колхоз активĕн политикăллă тавракурăмлăхне, унăн ăнланулăхне ӳстерессишĕн тăрăшать. Активистсем коммунистсемпе пĕрле агротехникăпа зоотехникăна вĕренмелли виçĕ çуллăх курссенче тата политкружокра вĕренеççĕ. Çаксем ĕнтĕ актива партипе правительство политикине тарăн ăнланса илме, ăна пурнăçлассишĕн вăя шеллемесĕр кĕрешме, артель кун-çулĕшĕн ответлăха туйма, государство тата обществăллă хуçалăхăн интересĕсене çирĕп хӳтĕлеме вĕрентеççĕ.

Актива воспитани парас ĕçре парторганизаци çакăнпа çеç чарăнса тăмасть. Вăл колхоз активне обществăллă-политикăллă ĕçсене те анлă хутшăнтарать. Партире тăман активистсенчен чылайăшĕ бригадăсенче, фермăсенче агитаторсем, вулавçăсем пулса ĕçлеççĕ, стена хаçачĕпе боевой листоксем кăларас ĕçе активлă хутшăнаççĕ. Партбюро час-часах уй-хир бригадисем хăйсен обязательствисене мĕнле пурнăçласа пынине палăртас, колхозниксене çĕнĕ çитĕнӳсем тума мобилизацилес шутпа обществăллă тĕрĕслӳсем иртерет. Çак ĕçе те вăл активистсене, массăна анлăн явăçтарать, тĕрĕслӳ итогĕсене вĕсемпе пĕрле сӳтсе явать.

Активпа тачă çыхăнса тата яланах ун çине таянса ĕçленине пула ĕнтĕ парторганизаци колхоз производствине малалла вăйлăн аталантарас, артель хуçалăхне нумай отраслĕ тата пысăк тупăш паракан тăвас задачăсене пурнăçлас ĕçе колхозниксен анлă массисене мобилизацилет, вĕсен политикăллă тата производствăллă активлăхне кунтан-кун ӳстерсе пырать.

Энгельс ячĕпе тăракан колхоз иртнĕ ялхуçалăх çулне ăнăçлă вĕçлерĕ. Малта пыракан агротехникăна пурнăçласа, кашни гектартан вăтам шутпа 15-шер центнер тырпул пухса кĕртрĕ. Государствăна тырă августăн 17-мĕшĕ тĕлне парса татрĕ. Колхозниксене кашни ĕçкунĕ пуçне 2,3-шер килограмм тĕштырă валеçсе пачĕ.

Çавăн пекех обществăллă вылььăх-чĕрлĕх ĕрчетессине вăйлатас тĕлĕшпе те пысăк ĕçсем туса иртернĕ. Артель обществăллă продуктивлă вылььăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана районта чи малтан тултарчĕ. Иртнĕ çулта кунта 200 пуç сысна вырнаçмалăх çĕнĕрен стандартлă вите туса лартнă. Унсăр пуçне ĕнепе сурăх фермисенчи çурт-йĕрсене тĕпрен юсанă, икĕ кормокухня тата ферма работникĕсем валли культурăллă общежити тунă.

Артельте хушма хуçалăхсем те аталанса пыраççĕ. Иртнĕ çулта колхоз 35 пин кирпĕч туса хатĕрленĕ. Тăхăр гектар çинче сад ĕрчетме тытăннă, унта 10 пин тĕп ытла улма-çырла йывăççисем лартнă. Хăмла ĕрчетес ĕçе пуçарса янă.

Колхоз государствăн ытти заданийĕсене пурнăçлас тĕлĕшпе те яланах паха тĕслĕхсем кăтартать. Артель членĕсем, мир вахтине тăрса, 1951—52 çулсенче кĕркуннепе хĕллехи вăхăтра вăрман хатĕрлемелли плана ăнăçлă тултарчĕç, икĕ уйăх хушшинче Тăван çĕршыва 3.674 фестметр йывăç касса хатĕрлесе пачĕç тата 3.046 фестметр каснă йывăçа çул хĕррине турттарса кăларчĕç. Кăçалхи сезонта кăна вăрман хатĕрлевĕнчен артель 15 пин тенкĕ тупăш тата колхозниксем 40 пин тенке яхăн илнĕ. Вăрман хатĕрлемелли плана срокчен тултарассишĕн пыракан ăмăртура мала тухнăшăн колхоза ВКП(б) райкомĕпе райсовет исполкомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне панă.

Парторганизаци ку таранччен тунă çитĕнӳсемпе лăпланса ларместь. Вăл актива воспитани парассине тата колхозниксем хушшинче политикăллă-массăллă ĕçе пĕрмаях лайăхлатса пырать.

Артель членĕсем иртнĕ ялхуçалăх çулĕн итогĕсене хăйсен пĕрлехи пухăвĕнче сӳтсе явса, 1952 çулта тата пысăкрах çитĕнӳсем тума пулчĕç. Вĕсем çакăн пек обязательствăсем илнĕ: кашни гектартан 110 пăтран кая мар тырпул туса илмелле, обществăллă вылььăх-чĕрлĕхĕн тухăçлăхне иртнĕ çулхинчен икĕ хут ӳстермелле.

Халĕ колхозниксемпе колхозницăсем, парторганизаци ертсе пынипе тата колхозри активистсен пуçарулăхне пула хăйсен обязательствисене пурнăçлассишĕн хастарлă кĕрешеççĕ. Колхозра çитес çуракине пур енчен те кăтартуллă хатĕрленессишĕн социализмлă ăмăрту анлă сарăлчĕ. Артель вăрлăх фончĕсем кирлĕ таран хывнă, хĕллехи агротехникăллă мероприятисене ăнăçлă пурнăçласа пырать. Уя 10 пин лав ытла тислĕк тата 3 пин лав торф кăларнă, 300 гектар çинче юр тытнă. Ялхуçалăх машинисене пĕтĕмпех юсаса çитернĕ.

Артелĕн производствăллă планĕ тăрăх обществăллă çурт-йĕрсем тăвас тĕлĕшпе те пысăк ĕçсем туса иртерме палăртнă. 1952 çулта кунта çĕнĕрен пысăк клуб, правлени çуртне, сысна, пăру тата чăхчĕп витисем тата фермăри ĕçсене механизацилеме çилпе ĕçлекен двигатель лартаççĕ. Унсăр пуçне урапа-çуна мастерскойĕ усаççĕ, кирпĕч производствине хальхинчен виçĕ хут ытларах ӳстереççĕ. Çак ĕçсене тума 500 кубометр йывăç хатĕрленĕ.

Паллах, Энгельс ячĕпе тăракан колхозри пуçламăш парторганизаци пек актив çине таянса ĕçлеме пĕлсен, колхозри парторганизацисем артеле организаципе хуçалăх енчен малалла çирĕплетес тĕлĕшпе тăракан задачăсене ăнăçлăрах татса пама пултараççĕ. Çавăнпа та ĕнтĕ партире тăман активпа çыхăну тытассине пĕрмаях çирĕплетсе пырасси, актива воспитани парасси кашни парторганизацин таса тивĕçĕ пулса тăрать. Активпа тачă çыхăнса ĕçлени парторганизацисене колхозниксен творчествăллă пуçарулăхне кулленех ӳстерсе пыма, ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ социализмлă ялхуçалăхне малалла аталантарас тĕлĕшпе пирĕн республика умне кăларса тăратнă задачăсене ăнăçлă пурнăçлама май парать.

П. ПАВЛОВ,
ВКП(б) Муркаш райкомĕн партипе профсоюз тата комсомол организацийĕсен пайĕн заведующийĕ.

Радиофикаци ĕçне тĕпрен вăйлатмалла

Çак кунсенче Шупашкарта районсенчи сыхăну кантурĕсен начальникĕсен, радиоузелсен аслă техникĕсен тата сыхăну работникĕсен республикăри канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлу республикăра радиофикаци ĕçĕ мĕнле пыни çинчен Сыхăну министерствин Чăваш республикинчи уйрăмĕн радио сарас тĕлĕшпе ĕçлекен дирекци начальникĕн А. Утюшев юлташăн докладне итлесе сӳтсе яврĕ.

Республикăра радиофикаци ĕçĕ çултан-çул вăйланса пырать. Аслă Отечественнăй вăрçă хыççăнхи çулсенче кăна республикăра радиоузелсен хисепĕ икĕ хут ытла ӳснĕ, нумай радиоузелсене çĕнĕ аппаратурăпа пуянлатнă. Халĕ пирĕн республикăра кашни район центрĕнче, кашни хулапа рабочи поселокра радиоузелсем пур. Республикăри 137 колхоза пĕтĕмĕшпех радиофикациленĕ, 27 колхозăн хăйсен радиоузелсем пур.

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ йышăннă тăрăх, 1955 çул тĕлне республикăна пĕтĕмĕшпех радиофикацилесе çитермелле.

Республикăна пĕтĕмпех радиофикацилесе çитерме государство 12 миллион та 412 пин тенкĕ укçа уйăрса панă.

Правительство решенине пурнăçласа пĕлтĕр Комсомольски районĕнчи Жданов ячĕпе, «Гигант», Вăрмар районĕнчи «Большевик», Çĕрпӳ районĕнчи Молотов ячĕпе тăракан тата ытти районсенче пурĕ 10 колхозра çĕнĕ радиоузелсем тунă.

Ĕçсыннисен килĕсене радио кĕртес тĕлĕшпе уйрăмах Комсомольски районĕ малта пырать. Районта пĕлтĕр икĕ колхозра çĕнĕ радиоузелсем тунă, «Ленинская победа» колхоза пĕтĕмпех радиофикациленĕ, радиоточкăсем ӳстермелли плана 550 процент тултарнă. Пур радиоточкăсем те лайăх ĕçлеççĕ. Çавăн пекех радиофикаци планне Красноармейски, Сĕнтĕр, Шăмăршă тата ытти чылай районсем ăнăçлă пурнăçласа пыраççĕ.

Республикăна радиофикацилемелли тĕп план тăрăх пĕлтĕр 37 радиоузел тумалла пулнă пулсан, пурĕ те 20 радиоузел кăна тунă, 169 колхоза пĕтĕмĕшпе радиофикацилеме пăхнă пулсан, 21 колхоза кăна радиофикациленĕ.

Колхозсемпе предприятисене радиофикацилемелли плана ăнăçлă пурнăçлас тĕлĕшпе Сыхăну министерствин Чăваш республикинчи уйрăмĕн радио сарас тĕлĕшпе ĕçлекен дирекци çителĕксĕр ĕçлет, çак ĕçе тивĕçлипе ертсе пымасть, радиоузелсем тума кирлĕ оборудованисем вăхăтра тата çителĕклĕ кӳрсе килмест. Строительствăпа монтаж управленийĕ колхозсене радиофикацилеме вăхăтра договор туса вĕсене тивĕçлипе пурнăçламасть, чылай чухне ĕç пахалăхĕ те начар пулать. Колхозсене радио кĕртме кирлĕ чылай материалсене хамăр республикăри предприятисенчех туса хатĕрлеме пулать. Анчах çак пархатарлă ĕçе халиччен те никам та пуçарман.

Чылай районсенче радиоузелсем мĕнпур хăвачĕпе ĕçлеймеççĕ. Хĕрлĕ Чутай районĕнчи 500 ватлă радиоузел 2.000 радиоточкăна ĕçлеттерме пултарать пулсан, кунта пурĕ те 407 радиоточка кăна. Радиоточкăсен хисепĕ сакăр çул ĕнтĕ пĕр хутшăнмасăр тăрать. Муркаш районĕнчи «Сталинец» колхозра 3,6 километрлă лини çинче те 10 радиоточка кăна.

Республикăра çавăн пекех радиоузелсене техника енчен юсавлă тытса тăрас, радиоприемниксем юсас ĕçе йĕркелес тĕлĕшпе те пысăк çитменлĕхсем пур. Çавна пула хăшпĕр радиоузелсем час-часах ĕçлемесĕр лараççĕ. Сăмахран, Пăрачкав районĕнчи радиоузел пĕлтĕр пурĕ 125 сехет ĕçлемесĕр ларнă. Сыхăну министерствин Чăваш республикинчи уйрăмĕн радио сарас тĕлĕшпе ĕçлекен дирекцин инженерĕсемпе техникĕсем районсенчи радиоузелсен ĕçĕнчи çитменлĕхсене пĕтерме пулăшмаççĕ. Радиоузелсенче ĕçлекенсен техникăллă пĕлĕвне ӳстерес тĕлĕшпе сахал ĕçлеççĕ, вĕсем хушшинче социализмлă ăмăртăва пуçарса ертсе пымаççĕ.

Республикăна радиофикацилес тĕлĕшпе кăçал нихçанхинчен ытларах ĕçлеме пăхнă. План тăрăх çĕнĕрен 7.000 радиоточка, унсăр пуçне эфирлă радиоточкăсем 3.500 хутшăнмалла. Çавна пурнăçлама çĕршер километр радиолини кармалла, çĕр айĕн кабельсем хумалла, кивĕ оборудованисене çĕннисемпе улăштармалла. Уйрăмах рабочи поселоксене радиофикацилес тĕлĕшпе пысăк ĕçсем тума пăхнă. Улатăр районĕнчи Алтышевăпа Соловьевскра, Шăмăршă районĕнчи Баскакинче, Пăрачкав районĕнчи Долгая Полянăра, Çĕмĕрле районĕнче Кабановăра, Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Саланчики поселокĕсенче çĕнĕ радиоузелсем тумалла. Колхозсен вăйĕпе кăна кăçал 44 радиузел тумалла.

— Сыхăну министерствин Чăваш республикинчи уйрăмĕн радио саракан дирекцийĕ районсене питĕ çителĕксĕр пулăшать,—тет Чурачăк районĕнчи сыхăну кантурĕн начальникĕ Петров юлташ.— Дирекци работникĕсем районсенче сайра хутра кăна пулаççĕ, практикăллă пулăшу памаççĕ. Вĕсем ытларах тĕрлĕ директивăсем парса, хутсем çырса лараççĕ.

Комсомольски районĕнчи сыхăну кантурĕн начальникĕ Квасов юлташ суту-илӳ организацийĕсемпе сыхăну учрежденийĕсем радио таварĕсем çителĕксĕр илсе килнине палăртать.—Райпотребсоюз репродукторсем, детекторлă приемниксем тата приемниксене лайăх ĕçлеттерме кирлĕ материалсем илсе килсе сутмасть. Çавна пула колхозсенчи чылай приемниксем ĕçлемеççĕ. Радиотоварсем илсе килес тĕлĕшпе сыхăну учрежденийĕсемпе суту-илӳ организацийĕсем хушшинче килĕшсе ĕçлени çук. Çавна пула пĕр йышши таварсем пачах çитмеççĕ, теприсем ытлашшипех выртаççĕ.

— Пирĕн районта колхозсене пĕтĕмĕшпе радиофикацилесе çитерме пур условисем те çителĕклĕ,—тет Вăрмар районĕнчи сыхăну кантурĕн начальникĕ Токсубаев юлташ.—Анчах радио сарас тĕлĕшпе ĕçлекен дирекци пире кирлĕ материалсене питĕ сахал ярса парать. Радиолини карма пралук, кабельсем, розеткăсем тата ытти материалсем çитменни радиофикаци планне пурнăçлама чăрмантарать. Республикăра радиоприемниксем юсас ĕçе тивĕçлипе йĕркелемен. Радиоаппаратурăсене юсама Шупашкарта пĕртен-пĕр мастерской уçнă, анчах унта районсенчен ярса панă приемниксене 3—4-шар уйăх юсамасăр тытса тăраççĕ.

Муркаш районĕнчи сыхăну кантурĕн начальникĕ Федоров юлташ сыхăну работникĕсем хушшинче социализмлă ăмăртăва вăйлатма кирли çинчен тĕплĕ чарănса тăчĕ.—Докладчик хăйĕн докладĕнче стахановла ĕçлекен пĕр коллектив çинчен, пĕр стахановец çинчен те каласа параймарĕ. Çакă вăл сынсемпе сахал ĕçлени, вĕсене ĕçе мобилизацилеме пĕлменни çинчен калать,—тет Федоров юлташ.

Канашлура çавăн пекех Улатăр хулинчи сыхăну кантурĕн начальникĕ Ананин юлташ, Ишлей районĕнчи сыхăну кантурĕн начальникĕ Константинов юлташ, Çĕмĕрле радиоузел техникĕ Броун юлташ, Пăрачкав районĕнчи сыхăну кантурĕн начальникĕ Коротков юлташ, Шăхасан районĕнчи радиоузелăн аслă техникĕ Тепловский юлташ, Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ çумĕнчи радиоинформаци комитечĕн председателĕ Александров юлташ, Улатăрти радиоузелăн аслă техникĕ Рубинович юлташ, СССР Сыхăну министерствин Чăваш республикинчи уйрăмĕн начальникĕ Дмитриев юлташ тата ыттисем те тухса каларĕç.

Ял Советсем вăрман хатĕрлес ĕçре

«Чăвашвăрман» трестĕнче ĕçлекен рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техниксем тата республикăри колхозниксемпе колхозницăсем вăрман хатĕрлемелли плана срокчен тултарассишĕн социализмлă ăмăртăва хутшăнса, аслă Сталин умĕнче пысăк обязательствăсем илчĕç. Хĕрлĕ Чутай районĕнчи колхозниксемпе колхозницăсем çак обязательствăсене чыслăн пурнăçлассишĕн социализмлă ăмăртăва активлă хутшăнчĕç.

Вăрман хатĕрлемелли плана срокчен тултарас ĕçре районта малта пыракан ял Совечĕсем паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Ку тĕлĕшпе уйрăмах Штанаш ял Совечĕ пысăк çитĕнӳсем турĕ. Çакă вăл организациллĕ-массăллă ĕçе лайăх йĕркеленинчен килнĕ. Колхозри коммунистсем, бригадирсем, ял Совет депутачĕсем йывăç хатĕрлекен бригадăсене ертсе пычĕç. Вулав çурчĕн заведующийĕ А. Кашкуров, пуçламăш комсомол организацин секретарĕ Н. Зотов юлташсем вăрман хатĕрлекенсен бригадисенче агитациллĕ-массăллă ĕçе лайăх йĕркелерĕç. Ял Совет депутачĕ Р. Иванова юлташ ăмăртура малта пыракансен ретĕнче пырса, кулленхи ĕç нормине 120—130 процент тултарса пынă. Р. Иванова юлташ хăйĕн примерĕпе вăрманта ĕçлекенсене ĕç нормине кулленех ирттерсе тултарма хавхалантарчĕ. Е. Осеева, А. Федоров, Р. Иванова, Г. Триковская юлташсем малтанхи кунсенчех Хисеп хăми çинче пулма тивĕçлĕ пулчĕç.

Колхозниксемпе колхозницăсем пĕтĕм вăй-хăвата, пултарулăха хурса ĕçленипе пула, Буденный ячĕпе тăракан колхоз вăрман хатĕрлемелли плана 107,7 процент, каснă йывăçа çул хĕррине кăлармалли плана 121,7 процент тултарчĕ.

Вăрман хатĕрлев планне срокчен тултарассишĕн пыракан социализмлă ăмăртăва хутшăнса Туканаш ял Совечĕ (председателĕ З. Чернов юлташ) чылай ĕçсем туса ирттерчĕ. Кунта вăрман хатĕрлес ĕçе депутатсем активлă хутшăнаççĕ. Колхоз председателĕ Кудряев юлташ, колхоз бригадирĕсем А. Кузьмин, П. Творогов депутатсем вăрманта тăрăшса ĕçлеççĕ. Кузмин юлташ ертсе пыракан бригада йывăç касса хатĕрлессипе тата ăна çул хĕррине турттарса кăларассипе плана ирттерсе тултарнă.

Аслă Сталин юлташ умĕнче илнĕ социализмлă обязательствăсене чыслă пурнăçлассишĕн Агнар, Сĕренкасси, Мăн Этмен, Кивĕ Атикасси, Чурпай ял Совечĕсене кĕрекен колхозсем тăрăшса ĕçлеççĕ, вĕсем вăрман хатĕрлевĕнче пысăк çитĕнӳсем турĕç.

Çитĕнӳсемпе пĕрлех вăрман хатĕрлемелли плана тултарас ĕçре районта пысăк çитменлĕхсем пур-ха. Ишеккасси, Карăçырми, Упукушкăнь ял Совечĕсене кĕрекен колхозсем вăрман хатĕрлевĕнче кая юлса пыраççĕ. Плана срокчен тултарас ĕç çине çав ял Совечĕсем сӳрĕккĕн пăхаççĕ. Депутатсемпе исполком членĕсем вăрманта сахал пулаççĕ.

Вăрман хатĕрлемелли плана ăнăçлă тултарасси сезонра пулакан ĕç. Вăрман хатĕрлевне вăраха ямасăр, пĕтĕм вăя хурса, пур майсемпе те тулли усă курса плана ирттерсе тултарассишĕн тăрăшмалла.

И. ОСИПОВ,
Хĕрлĕ Чутай район Совет исполкомĕн председателĕ.

1951 çулти юлашки уйăхсенче Шупашкарта тăвакан пир-авăр комбиначĕн çип арлакан цехĕ ĕçлеме пуçларĕ. Производство ĕçне çĕнĕрен хутшăннă работницăсенчен пĕри — М. К. Кондратьева юлташ сменăри задание 200—250 процент тултарса пырать.

УКĔРЧĔК ÇИНЧЕ: М. К. Кондратьева юлташ ĕçре.

С. ВИКТОРИНОВ фотоӳкерчĕкĕ.

Металл перекетлеççĕ

КАНАШ. Вагонсем юсакан заводра тимĕрçĕ цехĕн коллективĕ 1952 çулхи плана срокчен тата ирттерсе тултарма, продукцин хăйне ларакан хакне чакарма резервсене палăртать. Мускаври автомашинăсем тăвакан заводри стахановецсен примерĕпе, цехра тимĕрпе хурçă перекетлессишĕн социализмлă ăмăрту сарăлса кайрĕ. Паранин прессовщик производствăра юлакан металран шайбăсем туса кăларма тытăнчĕ. Вăл пĕр эрнере 1.590 килограмм паха металл перекетлерĕ.

Çак кунсенче Слепцов, Галкин тата Семенов тимĕрçĕсем, сменăри задание 7 сехетре пурнăçлама пулса, ытти тимĕрçĕсене ăмăртăва чĕнчĕç. Çак пуçарăва пĕтĕм цех коллективĕ ырларĕ. Чылай тимĕрçĕсем сменăри задание 6—7 сехетре тултараççĕ.

Цех коллективĕ икĕ эрнери заданирен ирттерсе 15 тонна деталь туса кăларнă, 8 тонна металл перекетленĕ.

И. МАРКОВ.

Сĕм вăрман кашланă çĕрте

ЙĔПРЕÇ. «Спотара» поселокĕ вырăнĕнче çирĕм çул каярах сĕм вăрман кашласа ларнă. Халĕ кунта рабочисен çурчĕсем тата бараксем нумай, вĕсен шучĕ çултан-çул ӳссе пырать. Поселокра завод ĕçлет. Унта хăма çураççĕ, стружка хатĕрлеççĕ.

Рабочисем пуян та культурăллă пурăнаççĕ. Поселокăн электростанци пур. Радиоузел, ача сачĕ, ача ясли, клуб, пекарня, фельдшер пункчĕ, çичĕ çул вĕренмелли шкул, обществăллă мунча ĕçлеççĕ.

Клубра кашни кун тенĕ пекех кинофильмсем, концертсем пулаççĕ.

Çирĕм çул каярах поселок таврашĕсенче çын пурăнмапа пĕрех пулнă. Халĕ кунта çĕнĕ ялсем ӳсе-ӳсе ларнă. Пĕчĕк колхозсене пĕрлештерсе пысăк колхозсем тунă.

Киров ячĕпе тăракан колхоза илер. Колхоз организаципе хуçалăх енчен çултан-çул тĕрекленсе пырать. Колхозниксем кăçал ĕçкунĕ тăрăх çĕршер пăт тыррă, нумай укçа илчĕç. Колхоз электростанци туса лартрĕ, кашни киле тата обществăллă çуртсене Ильич лампочкисем çутатаççĕ. Киноустановка ĕçлет. Клуб, фельдшер пункчĕ, библиотека çурчĕ, шкул, магазин тата ытти учрежденисем колхозăн ялне илем кӳреççĕ.

Колхозра хăма çуракан рама, йĕтĕн тылламалли машина ĕçлеççĕ.

Чылай колхозниксем вăрман каснă çĕрте ĕçлеççĕ. Хастарлă ĕçре стахановецсем ӳссе çитĕнчĕç. Стахановецсем пысăк ĕç укçи илеççĕ. Л. Константинов рабочи уйăхра 1.200 тенкĕ таран ĕçлесе илет. Ун пек тĕслĕхсем вуншар илсе кăтартма пулать.

Елĕк сĕм вăрман кашланă çĕрте çĕнĕ поселоксем, колхозсем ӳссе ларчĕç. Унта пурăнакансем Тăван çĕршыв вăй-хăвачĕшĕн, халăх ырлăхĕшĕн ырми-канми ĕçлеççĕ. Вĕсем хăйсене телейлĕ те саваплă пурнăç туса панăшăн большевиксен партине, аслă Сталина чĕререн тав тăваççĕ.

Г. РУСАНОВ.

„Чăваш Коммуни" хаçатра çырнă хыççăн

„Буфета мĕншĕн хупрĕç"

Январĕн 11-мĕшĕнче «Чăваш Коммуни» хаçатра Шупашкарти чăлха фабрикинче ĕçлекенсем çырнă «Буфета мĕншĕн хупрĕç?» ятлă çыру пичетленнĕччĕ.

ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕ чăлха фабрикинчи буфета суту-илӳ тума юрăхлă пӳлĕм пулман пирки хупни, халĕ юрăхлă пӳлĕм тупса пани, буфет ĕçлеме пуçлани çинчен пĕлтерчĕ.

В. И. Ленин вилнĕренпе 28 çул çитнĕ ятпа урăх çĕршывсенче пулнă хурлăхлă чаплă ларусем

ПОЛЬША

ВАРШАВА, январĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Паян, Государство Совечĕн залĕнче, Польшăри пĕрлештернĕ рабочи партин Центральнăй Комитечĕ пĕтĕм тĕнчери ĕçсыннисен аслă çулпуçĕ Владимир Ильич Ленин вилнĕренпе 28 çул çитнĕ ятпа хурлăхлă-чаплă лару ирттернĕ.

Ларура Польша республикин президенчĕ Б. Берут, сейм маршалĕ В. Ковальский, Министрсен Совечĕн председателĕ Ю. Циранкевичпа правительство членĕсем, Польшăри пĕрлештернĕ рабочи партин Центральнăй Комитечĕн политбюро членĕсем, ытти демократиллĕ партисен деятелĕсем, столицăри общественность представителĕсем тата Варшавăри предприятисенчи ĕçсыннисем пулнă.

В. И. Ленинăн пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен Польша республикин Министрĕсен Совечĕн председателĕ Ю. Циранкевич доклад тунă. Докладчик аслă Ленинăн пĕтĕм тĕнчери рабочисен революциллĕ юхăмне аталантарас, пусмăрти халăхсен ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн кĕрешес тĕлĕшпе пĕтĕм тĕнче историйĕнче паллă питĕ пысăк ĕçсем туни çинчен каласа кăтартнă. Аслă Ленин вилнĕ хыççăн, тенĕ Циранкевич, Ленин ялавне унăн аслă соратникĕ И. В. Сталин çӳлте тытса пырать. Ленин вилнĕренпе иртнĕ 28 çул хушшинче кашни çулталăк Ленин идейисем чаплă çĕнтерӳсем тунипе палăрса тăчĕ, тенĕ докладчик.

Ларăва пынисем пурте ура çине тăрса тата тăвăллă алă çупса И. В. Сталин юлташа чысласа саламланă.

ВЕНГРИ

БУДАПЕШТ, январĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Паян каçхине большевиксен партине тата совет государствине туса хунă Владимир Ильич Ленина асăннă ятпа государство оперин çуртĕнче хурлăхлă-чаплă лару пулнă. Ăна Венгрири ĕçсыннисен партийĕн Центральнăй Комитечĕпе Будапешт хула комитечĕ тата Будапешт хула совечĕ пухнă.

Лару президиумĕнче—Венгрири ĕçсыннисен партийĕн генеральнăй секретарĕ Матиас Ракоши, Венгри Халăх Республикин президиумĕн председателĕ Шандор Ронаи, Министрсен Совечĕн председателĕ Иштван Доби, ССР Союзĕн Венгрири посолĕ Е. Д. Киселев, Венгрири обществăллă организацисен руководителĕсем тата ыттисем те.

Ларура Венгрири ĕçсыннисен партийĕн Центральнăй Комитечĕн членĕ, Венгри юстици министрĕ Эрик Мольнар доклад тунă.

БОЛГАРИ

СОФИЯ, январĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Софийăра, халăх театрĕнче, В. И. Ленин вилнĕренпе 28 çул çитнĕ ятпа, Болгарири коммунистсен партийĕн хула комитечĕ, ĕçсынни депутачĕсен хулари Халăх совечĕ тата Болгарипе Совет Союзĕ обществин Софийăри совечĕ пухнипе, столицăри ĕçсыннисен хурлăхлă-чаплă пухăвĕ пулса иртнĕ.

Хурлăхлă-чаплă пухăва ĕçсынни депутачĕсен Софийăри Халăх Совечĕн председателĕ Иван Пашов уçнă. Вăл сĕннипе пухăва пынисем революцин аслă генийне, большевиксен никам çĕнтерейми партине тата тĕнчери социализмлă пĕрремĕш государствăна туса хунă В. И. Ленина иккĕ минут хушши ура çинче шăп тăнипе хисеплесе чысланă.

Пуху хисеплĕ президиума Пĕтĕм Союзри Коммунистсен (большевиксен) Партийĕн И. В. Сталин юлташ ертсе пыракан Центральнăй Комитечĕн Политбюро составне суйланă.

Чаплă çĕнтерӳсем туса пыракан вĕрентӳ—ленинизм çинчен, ĕçсыннисен хăватлă Совет Союзĕ тата Ленин ĕçне малалла туса пыракан аслă Сталин ертсе пынипе миршĕн, демократишĕн тата социализмшăн пыракан кĕрешӳ çинчен Болгарири коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕн агитаципе пропаганда пайĕн заведующийĕ Митко Григоров доклад тунă.

Хурлăхлă-чаплă пухăва пынисем пысăк хавхаланупа тата хаваслăхпа аслă Сталин патне саламлă çыру яма йышăннă.

ЧЕХОСЛОВАКИ

ПРАГА, январĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Прагăра В. И. Ленин вилнĕренпе 28 çул çитнĕ ятпа хурлăхлă-чаплă пуху пулнă. Ăна Чехословакири коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕ тата Прага облаçĕнчипе Прага хулинчи комитетсемпе пĕрле ирттернĕ.

Владимир Ильич Ленинăн пурнăçĕпе революциллĕ ĕçĕсем çинчен, ленинизм чаплă çĕнтерӳ туни çинчен Политикăпа социальнăй наукăсен аслă шкулĕн ректорĕ Ладислав Штол профессор доклад туса панă.

Хурлăхлă-чаплă пуху хыççăн «Интернационал» юрланă.

РУМЫНИ

БУХАРЕСТ, январĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Бухарестра Румыни столицинчи ĕçсыннисен представителĕсен хурлăхлă-чаплă ларăвĕ пулнă. Ларура Г. Георгиу-Дежпа пĕрле Румынири рабочи партин тата Румыни государствин руководителĕсем пулнă.

Лару председателĕ—Румынири рабочи партин Бухарест хула комитечĕн секретарĕ Георге Стойка сĕннипе ларăва пухăннисем Владимир Ильич Ленина ура çине тăрса хисепленĕ.

Хисеплĕ президиума, нумаййчен тăвăллăн алă çупса, ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн Сталин юлташ ертсе пыракан Политбюро членĕсене тата Румынири рабочи партин Центральнăй Комитечĕн Политбюро членĕсене суйланă.

В. И. Ленин вилнĕренпе 28 çул çитни çинчен Румынири рабочи партин Центральнăй Комитечĕн членĕ Александру Дрэгич доклад тунă.

Вăл доклад тунă вăхăтра ларăва пухăннисем темиçе хутчен те Совет Союзне чысласа, В. И. Ленинăн ĕçне малалла генилле туса пыракана—И. В. Сталин юлташа чысласа тăвăллă алă çупнă.

Ларăва пухăннисем тăвăллă алă çупса этемлĕхĕн çулпуçĕ И. В. Сталин юлташ патне çыру яма йышăннă.

Хурлăхлă-чаплă лару «Интернационал» юрланипе вĕçленнĕ.

МОНГОЛИ ХАЛĂХ РЕСПУБЛИКИ

УЛАН-БАТОР, январĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Паян каçхине Улан-Баторта, государствăн музыкăпа драма театрĕнче, Монголи халăхĕн революциллĕ партийĕн (МНРП) Центральнăй Комитечĕн, Монголи Халăх Республикин Аслă Хурал президиумĕн, Монголири революциллĕ çамрăксен союзĕн Центральнăй Комитечĕн, профсоюзсен Центральнăй Совечĕн, МНРП-ăн Улан-Батор хула комитечĕн, хулари Кĕçĕн Хурал президиумĕн, партипе обществăллă организацисен представителĕсемпе Монголи çарĕн тата хулари ĕçсыннисен представителĕсемпе пĕрле ирттернĕ хурлăхлă-чаплă ларăвĕ пулнă. Ларăва мĕнпур ĕçсыннисен аслă çулпуçĕпе учителĕ, большевиксен паттăр партийĕн организаторĕпе руководителĕ, Советлă Социализмлă государство туса хунă Владимир Ильич Ленин вилнĕренпе 28 çул çитнĕ ятпа ирттернĕ.

Хурлăхлă-чаплă ларăва пухăннисем пĕр минут хушши ура çинче шăп тăнипе аслă Ленина хисеплесе чысланă.

Владимир Ильич Ленин вилнĕренпе 28 çул çитни çинчен МНРП-ăн Центральнăй Комитечĕн секретарĕ Сосорбарма доклад тунă.

Докладчик совет халăхĕ, Ленинпа Сталинăн паттăр партийĕ тата Сталин юлташ ăслă ертсе пынипе, вăрçă хыççăнхи мирлĕ строительство вăхăтĕнче пĕтĕм тĕнче историйĕнче паллă çĕнтерӳсем туни çинчен каласа панă. «Генилле çулпуçсем—Ленинпа Сталин Монголи халăхĕпе совет халăхĕн туслăхне организацилерĕç тата вĕсене туслă пурăнма хавхалантарчĕç,—тенĕ Сосорбарма.—Пирĕн халăх Совет Союзĕпе тачă çыхăнса, тӳрĕ кăмăллă тата ырă шухăшлă тус тупрĕ».

ДЕМОКРАТИЛЛĔ ГЕРМАНИ РЕСПУБЛИКИ

БЕРЛИН, январĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). В. И. Ленин вилнĕренпе 28 çул çитнĕ ятпа паян Берлинра хурлăхлă-чаплă лару пулнă. Ăна Германири социалистсен пĕрлĕхлĕ партийĕн Центральнăй Комитечĕ тата çак партин Берлинри организацийĕн правленийĕ ирттернĕ.

Президиумра Германири социалистсен пĕрлĕхлĕ партийĕн Центральнăй Комитечĕн председателĕ, Демократиллĕ Германи Республикин президенчĕ Вильгельм Пик, правительство членĕсем тата ыттисем те пулнă.

Хурлăхлă-чаплă ларăва производствăри активистсем, Берлинăн демократиллĕ секторĕнчи тата Демократиллĕ Германи Республикинчи культура деятелĕсем, обществăллă тата политикăллă организацисен нумай представителĕсем пынă.

В. И. Ленин вилнĕренпе 28 çул çитни çинчен Германири социалистсен пĕрлĕхлĕ партийĕн Центральнăй Комитечĕн Политбюро членĕ Франц Далем доклад тунă.

ФИНЛЯНДИ

ХЕЛЬСИНКИ, январĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Финляндири хуласемпе поселоксенче генилле çулпуçпа учителе, большевиксен партийĕпе Совет государствине туса хунă В. И. Ленина асăнса хурлăхлă-чаплă пухусем ирттернĕ. Куопио хулинче тата Иисвеси поселокĕнче Ленинăн пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен сейм депутачĕ Маури Рюэмя доклад тунă. Вăл Ленинпа Сталин Финлянди никама пăхăнманлăхĕшĕн яланах тăрăшнине уйрăмах палăртнă.

Ленин кунĕсенче

Çĕр чăмăрĕ çинчи халăхсем пĕтĕм тĕнчери ĕçсыннисен аслă çулпуçĕпе учительне, большевиксен партине тата тĕнчери пĕрремĕш советлă социализмлă государствăна туса хунă Владимир Ильич Ленина хисеплесе асăнаççĕ.

Китай Халăх Республикинчи, халăх демократи çĕршывĕсенчи—Польшăри, Чехословакири, Венгрири, Румынири, Албанири, Болгарири тата ытти çĕршывсенчи хуласемпе ялсенче В. И. Ленина асăнса хурлăхлă-чаплă ларусемпе нумай çынлă пухусем пулса иртнĕ. Ĕçсыннисем хăйсем Ленин—Сталин ĕçне чунтан юратнине тата Совет Союзне, большевиксен партине тата Ленинăн вилĕмсĕр вĕрентĕвне малалла аталантарса пыракан аслă çулпуçа Иосиф Виссарионович Сталина чĕререн парăнса тăнине кăтартса панă.

Предприятисенче, шкулсенче В. И. Ленин пурнăçĕпе тата ĕçĕсемпе паллаштаракан выставкăсем уçнă.

Румынири рабочи партин центральнăй комитечĕпе Румыни министрĕсен совечĕ çĕршыв столицинче—Бухарестра пĕтĕм тĕнчери ĕçсыннисен аслă учителĕн Владимир Ильич Ленинăн памятникне лартма постановлени йышăннă.

Румынири рабочи партин центральнăй комитечĕ тата Румыни министрĕсен совечĕ Бухарестри плана экономика институчĕн студенчĕсем тата профессорĕсемпе преподавателĕсем института Владимир Ильич Ленин ятне пама ыйтнипе килĕшнĕ. Çавна май январĕн 21-мĕшĕнче институтра митинг пулнă. Митинга пухăннисем хăйсем В. И. Ленинăн ĕçне малалла генилле туса пыракан И. В. Сталин юлташа чĕререн юратнине кăтартса панă.

Магдебургра (Демократиллĕ Германи Республики) ĕçсыннисен пухăвĕ пулнă. Унта Саксони-Ангальт çĕрĕн премьер-министрĕ Вернер Брушке сăмах тухса каланă. Шăпах та халĕ, миршĕн тата Германи пĕрлĕхĕшĕн кĕрешесси ачлă саралса пынă вăхăтра, Ленинăн аслă вĕрентĕвĕ нимĕç халăхĕшĕн уйрăмах пысăк вырăн йышăнса тăрать, тенĕ вăл.

Стокгольмра (Швеци) В. И. Ленин вилнĕренпе 28 çул тултарнине палăртнă ятпа хурлăхлă-чаплă лару пулнă. Унта Владимир Ильич Ленинăн пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен паллă обществăллă деятель Кнут Ульссон доклад тунă. Ленинăн шанчăклă ученикĕ И. В. Сталин ертсе пынипе совет халăхĕ Ленин хушса хăварнисене пурнăçа кĕртрĕ, тенĕ докладчик.

Иранри «Бесуе аяеде» хаçат январĕн 22-мĕшĕнче пĕрремĕш страницăра В. И. Ленин портретне тата Ленин вилнĕренпе 28 çул тултарни çинчен пысăк статья пичетленĕ. Статьяра «этемлĕхĕн аслă генийĕ, тĕнчери социализмлă пĕрремĕш государствăна туса хунă, мĕнпур ĕçсыннисен ăслă çулпуçĕ, ĕçсыннисене капитализм пусмăрĕнчен хăтăлмалли çулпа малалла янă, мĕнпур нацисен ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕн шанчăклă тусĕ вилнĕренпе 28 çул çитрĕ», тесе çырнă.

Хаçат çакна палăртнă: Ленин ĕçĕсем тата унăн аслă сăмахĕсем халĕ прогрессивнăй этемлĕхе мирлĕ пурнăç тăвас, пурнăçра тĕрĕс йĕркесем тăвас, çавăн пекех тата империализма, вăрçа, чуралăха тата пурнăçра каялла кайса пынине хирĕç кĕрешмелли çулпа илсе пыраççĕ», тенĕ.

В. И. Ленин вилнĕренпе 28 çул çитнĕ ятпа Мускавра пулнă хурлăхлă-чаплă лару çинчен пĕлтернине Францири коммунистсен партийĕн «Юманите» хаçачĕ пĕтĕмпех пичетленĕ. Ку лару çинчен пĕлтернĕ хыпарсене Францири «Либерасьон», «Комба», «Фран-тирер», «Сематен-де-пеи» тата «Паризьен либере» хаçатсем пичетленĕ.

Венгрири пур хаçатсем те январĕн 22-мĕшĕнче В. И. Ленин вилнĕренпе 28 çул çитнĕ ятпа Мускавра пулнă хурлăхлă-чаплă лару çинчен пĕлтернине пичетленĕ тата П. Н. Поспелов юлташ хăйĕн докладĕнче мĕн калани çинчен çырса пĕлтернĕ. «Сабад неп» хаçат доклад заголовокне «Ленинизм — этемлĕхĕн ирĕклĕхшĕн кĕрешмелли никам çĕнтерейми ялавĕ», тесе ят панă. (ТАСС).

Венгрире В. И. Ленин произведенийĕсене пичетлесе кăлараççĕ

БУДАПЕШТ, январĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Венгри Халăх Республикинчи нумай çынсем Владимир Ильич Ленинăн произведенийĕсене вулама тăрăшаççĕ. Çĕршыва Совет Çарĕ ирĕке кăларнăранпа В. И. Ленин произведенийĕсене нумай пичетлесе кăларнă, вĕсен пĕтĕм тиражĕ 1,5 миллион экземпляртан ытла. Çак вăхăт хушшинче В. И. Ленинăн суйласа илнĕ произведенийĕсен икĕ томне (100 пин экземпляр), «Аграрлă ыйту çинчен» ятлă икĕ томлă кĕнекене (50 пин экземпляр), «Империализм—капитализмăн чи çӳлти сыпăкĕ» кĕнекене (125 пин экземпляр) тата ытти произведенисене те пичетлесе кăларнă. В. И. Ленин Сочиненийĕсен 1, 2, 21, 22, 23 тата 31-мĕш томĕсем пичетленсе тухнă. Кашни тома 50 пин экземпляр пичетлесе кăлараççĕ.

В. И. Ленинпа И. В. Сталин произведенийĕсене пухса кăларнă кĕнекесен пĕтĕм тиражĕ 390 пин экземпляра çитет.

ООН Генеральнăй ассамблейин улттăмĕш сессийĕ

Политика комитетĕнче Пĕрлешнĕ нацисен организацине çĕнĕ членсем илесси çинчен сӳтсе явни

Я. А. Малик сăмахĕ

ПАРИЖ, январĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). Паян Генеральнăй Ассамблейăн Политика комитетĕнче Пĕрлешнĕ нацисен организацине çĕнĕ членсем илесси çинчен малалла сӳтсе явнă.

Совет Союзĕ ку ыйтупа мĕнле позици тытса пыни çинчен СССР делегацийĕ пуçлăхĕн заместителĕ Я. А. Малик сăмах тухса каланă. Вăл Пĕрлешнĕ нацисен организацийĕн Уставĕнче çĕнĕ членсем илес ĕçре мĕнле условисем тата мĕнле йĕрке туни çинчен каласа панă. Я. А. Малик, кун çинчен каласа, Уставри йĕркесене хирĕç пыракансем халиччен сессисенче панă нумай сĕнӳсенче Англипе Америка блокне килĕшекен государствăсен пĕр ушкăнне çеç Пĕрлешнĕ нацисен организацине илтересшĕн пулнине, мирлĕ тата демократиллĕ политика тытса пыракан тата Пĕрлешнĕ нацисен организацине кĕме тулли право пур çĕршывсене—халăх демократи çĕршывĕсене ООН членне илессине хирĕç тăнине кăтартса панă.

Ку ыйтупа Перу делегачĕ тăратнă резолюци проектне Малик хытă критикăланă, асăннă резолюци проектĕнчи сĕнӳсем тĕрĕс мар тата йышăнма юрăхсăр пулнине кăтартса панă.

Çавăн пек сĕнӳсене йышăнни çĕнĕ членсем илес ыйтăва йывăрлатма тата пăтраштарса яма кăна пултарать, ку вара государствăсем пĕр-пĕринпе çыхăнса тăрас ĕçре тата пысăкрах йывăрлăхсем тухса тăрасси тата тĕнчери лару-тăру ытларах çивĕчленесси патне илсе пыма пултарать,—тенĕ СССР делегачĕ.

Уставра каланипе килĕшӳллĕн тата ООН членне илме тахçанах заявлени панă 13 государствăна тата нумай пулмасть заявлени панă Ливие пĕр тăхтаса тăмасăр ООН членне илессишĕн тăрăшса,—тенĕ Малик,—СССР делегацийĕ Совет правительстви хушнипе çакăн пек резолюци проекчĕ тăратать:

«Генеральнăй Ассамблея Хăрушсăрлăх Советне Пĕрлешнĕ нацисен организацийĕн членне илме ыйтса Албани, Монголи Халăх Республики, Болгари, Румыни, Венгри, Финлянди, Итали, Португали, Ирланди, Трансиордани, Австри, Цейлон тата Непал панă заявленисене тепĕр хут пăхса тухма, çавăн пекех Ливи панă заявление пăхса тухма сĕнет».

Юлашкинчен Малик СССР делегацийĕ ячĕпе пур делегацисене те ООН Уставĕпе килĕшӳллĕ мар политикăна—Пĕрлешнĕ нацисен организацине çĕнĕ членсем илнĕ чухне государствăсен пĕр ушкăнне хисеплемен, государствăсен тепĕр ушкăнне ытлашши кăмăлласа, вĕсемшĕн тăрăшакан политикăна, ку ыйтăва татса парас ĕçре хытă чăрмантаракан политикăна пăрахăçлама, совет делегацийĕ тăратнă резолюцие йышăнма чĕннĕ.

Унтан Куба представителĕ сăмах илнĕ. Вăл тухса калани вара Уставра Пĕрлешнĕ нацисен организацине çĕнĕ членсем илес пирки тунă условисемпе йĕркесенчен пăрăнса иртме тата Хăрушсăрлăх Совечĕн çак ыйту тĕлĕшĕнчи прависемпе полномочийĕсене улăштарма çĕнĕ майсем тупма хăтланни пулнă. Вăл Хăрушсăрлăх Советĕнче пур ыйтусене те пĕр саслă пулса татса памалли принципа хурланă, ку принцип США-на тата Америкăпа Англи блокĕнчи ытти çĕршывсене хăйсем мĕн шутланине Советра пурнăçлама, хăйсем хĕснипе решени йышăнтарма чăрмантарать. Унтан Куба представителĕ Устава ун пек те, кун пек те ăнлантарма пулни çинчен каланă. Юлашкинчен вăл: çĕнĕ членсем илес ыйту политикăллă ыйту та мар, пысăк пĕлтерĕшлĕ ыйту та мар, вăл ООН хăйĕн ĕçĕсене туса пымалли йĕркипе çыхăнса тăракан ыйту сен шутне кĕрет; вĕсем пирки решени йышăннă чухне Хăрушсăрлăх Советĕнче пурте пĕр саслă пулмалли йĕркепе усă курмалла мар, тенĕ.

США-на чура пекех пăхăнса тăракан хăшпĕр делегатсем те: Бельгипе Чили делегачĕсем тата гоминдановец Уставра çырса хунине Куба представителĕ пек пăсса кăтартнипе килĕшме май çук, тесе шутланă.

Чили делегачĕ нумайччен тата тухса тăнă ыйтусене пĕтĕмпех пăтраштарса каланă. Çапах та вăл, систермелле каласа, Совет Союзĕн позицийĕ Уставпа килĕшӳллĕ пулса тăнине ирĕксĕрех йышăннă. Вăл: хальхи пек редакциленĕ Устав пур чухне, Совет Союзĕ тытса пыракан позици тĕрĕс пулнине шута илес пулать, Перу делегацийĕ тăратнă резолюци Генеральнăй Ассамблейăна çĕнĕ членсем илес ыйтăва татса парас ĕçре пулса тăнă йывăрлăхран тухма пулăшмасть, тенĕ.

Бельги представителĕ Перу делегачĕн резолюци проекчĕшĕн тăни çинчен пĕлтернĕ, анчах хăй енчен асăрхаттарусем чылай тунă. Вăл та асăннă проект çĕнĕ членсем илес ĕçре пулса тăнă йывăрлăхран тухма пулăшманни çинчен каланă.

Паянхи ларура юлашкинчен Египет делегачĕ сăмах тухса каланă. Вăл ООН Уставĕнче çав организацие пур çĕршывсене те хутшăнтармалли çинчен, ку организаци мирлĕ политика тытса пыракан тата Уставра палăртнă ытти мĕнпур требованисене йышăнакан государствăсене пурне те пĕрлештерсе тăмалли çинчен каланă. Пирĕн ООН членне илме ыйтса заявлени панă государствăсем тĕлĕшпе Уставра çырса хунă требованисене ытла хытă пăхăнас пулмасть, заявлени панă 14 государствăна ООН членне илес пулать, тенĕ Египет делегачĕ.

Ку ыйтăва январĕн 23-мĕшĕнчи ирхи ларура малалла сӳтсе явма палăртнă.

Экономикăпа финанс ыйтăвĕсен комитетĕнче

ПАРИЖ, январĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). ООН Генеральнăй Ассамблейин экономикăпа финанс ыйтăвĕсен комитетĕнче тĕнчери экономика çинчен сӳтсе явнă, ку ыйту тăрăх тăратнă резолюци проекчĕсене пăхса тухнă. США-па Чили проекчĕсене Совет Союзĕ сĕннĕ тӳрлетӳве кĕртсе йышăнни çинчен пĕлтернĕччĕ. Кунсăр пуçне, комитетра Чехословаки тăратнă резолюци проектне те сӳтсе явнă. Ку резолюцире Атлантика блокĕнчи çĕршывсем пуçарса янипе васкасах хĕçпăшал хатĕрлеме тытăнни халăхсен пурнăçне нумай начарлатнине палăртнă тата Генеральнăй Ассамблейăн ООН членĕнче тăракан государствăсене ĕç халăх пурнăçне лайăхлатма васкавлă мерăсем йышăнма сĕнмелле, тесе çырнă.

Чехословаки тăратнă резолюци проектне хӳтĕлесе СССР, Украина, Белоросси тата Польша представителĕсем сăмах тухса каланă. Польша представителĕ Кац-Сухи çакна палăртнă: малтан Маршалл планĕ çумне, унтан Атлантика блокĕ çумне пĕрлешнĕ çĕршывсенче экономика тĕлĕшĕнчи мĕнпур ĕçсене Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсемпе вĕсен союзникĕсен Совет Союзне тата халăх демократи çĕршывĕсене хирĕç вăрçă хатĕрлес ĕçе пăхăнтарнă. Юлашки вăхăтра Хĕвеланăç Европăри государствăсенче тата США-ра экономикăна çар хуçалăхĕ туса хурас ĕç тата ытларах вăйланчĕ. Çакă рессурссен ытларах та ытларах пайĕпе халăха нимӗнле усă та паман япаласем туса хатĕрлеме усă курнипе палăрать. Хĕçпăшалсем туса хатĕрлеме укçа нумайрах та нумайрах пĕтерессĕ, çакă вара асăннă государствăсене хуçалăхăн мĕнле те пулин отраслĕнче нумай укçа хывса тумалли ĕçсене, хĕçпăшал туса хатĕрлессипе çыхăнман ĕçсене тума май памасть.

Васкасах хĕçпăшал хатĕрлени ĕçсынни массисен пурнăçне начарлатнине тата массăсем хăйсен пурнăç условийĕсене лайăхлатассишĕн кĕрешнине Кац-Сухи кăтартса панă. Хĕвеланăç Европăри ĕçсынни массисем, тенĕ вăл, васкасах хĕçпăшаллантарассине хирĕç тăраççĕ. Вĕсем Маршалл планĕ текенскерĕ Хĕвеланăç Европăри çĕршывсене юсаса аталантарма пулăшманнине, ăна çав çĕршывсене пĕтĕмпех Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсене пăхăнтарма тата вĕсене агрессиллĕ Атлантика блокне, çĕнĕ вăрçă пуçарас ĕçе хутшăнтарма шухăшласа кăларнине ăнланса илчĕç. Польша делегацийĕ Чехословаки резолюци проектне пĕтĕмпех ырлама тивĕçлĕ проект тесе шутлать, мĕншĕн тесен унта чылай çĕршывсенче экономика начарланса ситнине тĕрĕс палăртнă, ĕçсынни массисен пурнăç условийĕсене лайăхлатас тĕлĕшпе мĕнле ĕçсем тумалли çинчен тĕплĕ каланă.

Франци, Англи, Бельги, Голланди тата ытти çĕршывсен делегачĕсем Чехословаки тăратнă резолюци проектне хирĕç каланă. Вĕсем Америка кăларса тăратнă сăлтава—васкасах хĕçпăшаллани США-на тата ун майлă тăракан çĕршывсене «хăйсене хӳтĕлеме» кирлĕ текен сăлтава хӳтĕленĕ. Анчах пурте лайăх ăнланаççĕ ĕнтĕ, çав сăлтава Америка деятелĕсем США-н агрессиллĕ милитаристла политикине йытарса тăрас ĕçре усă курма кăна кăларса тăратаççĕ. США делегацийĕ хĕснĕ пулин те, вăйсăр çĕршывсен нумай делегацийĕсем, Чехословаки тăратнă резолюци проектне уççăнах ырлама хăяйман пулин те, сасăланă чухне нихăш майлă та сасăлама килĕшмен. Резолюци проектне хирĕç 15 делегаци сасăланă, çавăн чухлĕ сасăпа çеç ăна сирсе янă. 20 делегаци, пуринчен ытларах вăйсăр çĕршывсен делегацийĕсем, нихăш майлă та сасăламан. Резолюци проектне йышăнассишĕн 7 делегаци, (СССР, Украина, Белоруссии, Польша, Чехословаки, Эквадор тата Гватемала) сасăланă.

Дамаскра демонстрацие тухнă студентсем çине пăшалпа пенине хирĕç протестлеççĕ

БЕЙРУТ, январĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Ливанри «Аш-Шарк» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Дамаск университечĕн ректорĕ Зурейк доктор полици демонстрацие тухнă студентсем çине пăшалпа пенине хирĕç протестлесе отставкăна тухнă. Ун хыççăн çак университетăн ытти профессорĕсем те ĕçлеме пăрахнă.

Хаçат çакна палăртать: асăннă демонстраци вăл мирлĕ демонстраци пулнă, унта, студентсемсĕр пуçне, Сири столицинчи—Дамаскри халăх хутшăннă. Демонстрацие хутшăннисем «Империалистсен пĕрлехи оборона тумалли проекчĕ тĕп пултăр!», «Тăваттăмĕш пункт тĕп пултăр!», «Сывă пултăр пĕтĕм тĕнчери мир!» тесе лозунгсем кăшкăрнă.

Демонстрантсем çине пăшалпа пенĕ чухне 15 çынна вĕлерни çинчен «Аш-Шарк» хаçат пĕлтерет. «Телеграф» хаçат демонстраци вăхăтĕнче арестленĕ 170 студента Катана лагерьне, каторгăра ĕçлеме яни çинчен çырать.

ФРАНЦИ ВЛАÇĔСЕМ ЭРИБЕРТО ХАРАНА ФРАНЦИЕ ПЫМА ИРĔК ПАМАН

МОНТЕВИДЕО, январĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). «Эль Паис» хаçат, Ассошиэйтед пресс тата Франс пресс агентствисенчен илнĕ хыпарсем тăрăх, çакăн çинчен пĕлтерет: Францин Мексикăри консульстви Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн членне, «Халăхсем хушшинчи мире çирĕплетнĕшĕн» памалли тĕнчери Сталинла премин лауреатне, Мексика министрĕ пулнă Эриберто Харăна Франци пыма ирĕк паман.

Хĕвеланăç Германи вăрçа хатĕрленни

Бонра пурте çар службинче пулмалли йĕрке туни çинчен пĕлтернĕ

БЕРЛИН, январĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Бонри влаçсем Хĕвеланăç Германире пурте çарта пулмалли йĕрке тума хатĕрленни çинчен официальнă пĕлтернĕ Вĕсем çав йĕркене Америка империалисчĕсем хушнипе Хĕвеланăç Германи çарне пухас шутпа тăваççĕ. Ку пĕлтерӳ пирки Хĕвеланăç Германири халăх хытă шикленсе ӳкнĕ.

Хĕвеланăç Германири ДПА агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Бонри правительствăн «хăрушсăрлăх ыйтăвĕсемпе ĕçлекен» уполномоченнăйĕ, чăннипе çар министрĕ пулса тăракан Теодор Бланк радио тăрăх сăмах тухса каланă. Унта вăл «пурте çарта пулмалли йĕрке тăрăх хĕçпăшаллă вăйсем тăвасси» çинчен пĕлтернĕ. Бланк 1929—1934 çулсенче çуралнă çынсене çара илесси, пĕтĕмпе 300—400 пин çынран тăракан 12 дивизи тăвасси çинчен, ку дивизисем «Европăна пĕрле хӳтĕлемелли пĕрлешӳ» текенскерĕн аллине, урăхла каласан, Америкăри вăрçă пуçарма хĕтĕртекенсен аллине куçмалли çинчен каласа панă.

Бланк çавăн пекех правительство Хĕвеланăç Германин сывлăш-çарĕн чаçĕсене тата сырансене хӳтĕлекен çарĕсене тума йышăнни çинчен пĕлтернĕ.

Бонри парламент «Европăна пĕрле хӳтĕлемелли пĕрлешӳ çинчен тунă договор» текенскерне çирĕплетнĕ хыççăнах, пурте çар службинче пулмалли закон вăй илет, ăна пурнăçлама тытăнаççĕ.

Хĕвеланăç Германире пур çĕрте те Бонри правительство вăрçа хатĕрленнине хирĕç протестленĕ ятпа пысăк демонстрацисемпе митингсем пулса иртеççĕ.

БЕРЛИН, январĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). АДН агентстви пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер Нюрнбергри «Ахт-Ур-Блатт» хаçат Бонри правительствăн çар министрĕ Бланк çынсене çара пухмалли плансем хатĕрлени çинчен хыпар пичетленĕ. Малтанлăха 1929—1934 çулсенче çуралнă çамрăк нимĕçсене 300 пин çынран пуçласа 400 пин çын таран çара илеççĕ. Кунсăр пуçне, 1915—1928 çулсенче çуралнă çынсенчен вăрçа илсе кайма хатĕрлемелли çар тума палăртнă. Иртнĕ эрнере «Франкфуртер Рундшау» хаçат пĕлтернĕ хыпар—Хĕвеланăç Германи çарне вĕренгсе хатĕрлеме Гитлер çарĕнче пулнă офицерсемпе унтер-офицерсене 80 пин çын мобилизацилеме план туни çинчен калакан хыпар—тĕрĕс пулни палăрчĕ, тесе çырать хаçат. Çар вĕренгсе хатĕрлес шутпа кăçалхи июлĕн 1-мĕшĕ тĕлнех Хĕвеланăç Германири казармăсене 30 пин çын пухма палăртнă.

Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн чĕнĕвĕ çине Австрире 881.637 çын алă пуснă

ВЕНА, январĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Миршĕн тăракансен Австрири совечĕ пĕлтернĕ тăрăх, Австрире январĕн 19-мĕшĕ тĕлне Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕ пилĕк аслă держава хушшинче мире сыхламалли килĕшӳ тума чĕнсе калани çине 881.637 çын алă пуснă. Чĕнӳ çине алă пустарас ĕç малалла пырать.

Корейăри ĕççем

ХАЛĂХ ÇАРĔН ГЛАВНĂЙ КОМАНДОВАНИЙĔ ПĔЛТЕРНИ

ПХЕНЬЯН, январĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн главнăй командованийĕ паян çапла пĕлтернĕ: Корея Халăх çарĕн соединенийĕсем Китай халăх добровольцĕсемпе пĕрле пур фронтсенче те Америкăпа Англи интервенчĕсене тата Ли Сын Ман çарĕсене хирĕç оборонăра тăрса çапăçаççĕ, вĕсен салтакĕсемпе офицерĕсене чылай пĕтереççĕ.

Паян Халăх çарĕн зенитнăй чаçĕсем тата тăшман самолечĕсене хирĕç çапăçакан салтакĕсем тăшманăн 3 самолетне персе ӳкернĕ, çав самолетсем унччен, ытти самолетсемпе пĕрле, Нампхо, Вонсан тата Хамхын районĕсене тапăннă çĕре хутшăннă пулнă.

ПХЕНЬЯН, январĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн главнăй командованийĕн паянхи пĕлтерĕвĕнче çапла каланă: Корея Халăх çарĕн соединенийĕсем Китай халăх добровольцĕсен чаçĕсемпе пĕрле пур фронтсенче те Америкăпа Англи интервенчĕсене тата Ли Сын Ман çарĕсене хирĕç оборонăра тăрса çапăçаççĕ, вĕсен салтакĕсемпе офицерĕсене тата техникине нумай пĕтереççĕ.

Хĕвелтухăçĕнчи сыран патĕнче, Тхончхонь районĕнче, Халăх çарĕн чаçĕсем тăшманăн пĕр карапне шыва путарнă.

Халăх çарĕн зенитнăй чаçĕсем тата самолетсене хирĕç çапăçакан салтакĕсем паян тăшманăн 3 самолетне персе ӳкернĕ, çав самолетсем унччен, ытти самолетсемпе пĕрле, Вонсан, Ковон тата Сукчхонь хулисем çине тапăннă çĕре хутшăннă.

Америка генералĕсем уççăнах каласа пани

НЬЮ-ЙОРК, январĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăн 8-мĕш çарĕн командующийĕ Ван Флит генерал Корейăри интервенци США-ри влаçра тăракан ушкăнсене васкаса хĕçпăшал нумай хатĕрлес ĕçе анлăрах сарма, çĕршыва милитаризацилес ĕçе вăйлатма кирлине йышăннă. Юнайтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Ван Флит Корейăри вăрçа «турă пилленĕ ĕç» тесе ят панă, вăл «Корейăри вăрçă пирĕн оборонăна тивĕçлĕ таран йĕркелеме кирлĕ, хальхи вăхăтра пирĕн заводсем каллех ытларах та ытларах хĕçпăшал хатĕрлеççĕ», тенĕ.

Америкăн Корейăри çарĕсем вăйлă пулнипе Ван Флит тепĕр хут мухтаннă. Юнайтед пресс агентствин корреспонденчĕ унтан Корейăра çывăх вăхăтра перемири тума май пур-и, тесе ыйтсан, вăл ку ыйту çине ответлеме килĕшмен, «эпĕ ку ĕçе пĕлместĕп» тата «ООН планĕсем мĕнли маншăн паллă мар» тенипе вăл асăннă ыйту çине ответлесрен пăрăннă.

Ван Флит каласа панинчен США-ри влаçра тăракан ушкăнсем Корейăри вăрçа чарса лартас пирки перемири тума пачах та тăрăшманни, вĕсем Корейăри вăрçа малалла тăсма тăрăшни курăнса тăрать.

«Юнайтед Стейтс Ньюс энд Уорлд рипорт» журнал Корейăри командованин тепĕр представителĕпе—Джой вице-адмиралпа, Америкăн Корейăри каласусенчи делегацийĕн пуçлăхĕпе калаçни çинчен, вăл мĕн каласа пани çинчен пĕлтернине пичетленĕ. «Хальхи вăхăтри лару-тăру вăрçăра ĕçсем ăнăçлă пулса пыманнипе паллă, манăн ирĕксĕрех çавна шута илме тивет. Вăрçăри лару-тăру улшăнмасан, эпир малашне те çирĕп перемири тума хытă тăрăшăпăр», тенĕ Джой.

Джой çапла каланинчен Америка командованийĕ перемири çинчен пыракан калаçусемпе фронтри лару-тăрăва улăштарма кăна усă курма тăрăшни курăнать. Пурте пĕлеççĕ ĕнтĕ, хальхи вăхăтра вăрçăри лару-тăру интервентсемшĕн йывăрланса çитнĕ.

Тунисри ĕççем

ПАРИЖ, январĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Франс пресс агентстви Тунисран пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер Туниспа Сус хулисем хушшинчи чугун çула Тунисран 120 километр кăнтăртарахри вырăнта аркатнă. Çав районта, Монастир хули çывăхĕнче, телеграф юписене йăвантарнă. Тунисран 50 километр хĕвелтухăçнерехри Бон сăмсахĕ çинче çĕр айне хунă кабеле пăснă.

ПАРИЖ, январĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Франс пресс агентстви пĕлтернинчен çакă паллă пулнă: ĕнер Сус хулинче Франци çарĕсемпе халăх хушшинче тытăçусем пулса иртнĕ. Унта 10 çынна вĕлернĕ, 25 çынна амантнă. Францин çав хулари гарнизонĕн командующийĕ Дюран полковник вилмеллех аманнă.

Тунисра юн тăкăнать

ПАРИЖ, январĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Парижри хаçатсем Тунисра халĕ пулса пыракан ĕççем çинчен нумай çыраççĕ. Ирхи хаçатсем çакăн çинчен пĕлтереççĕ: ĕнер Тунисри çамрăксем Францин генеральнăй резиденчĕн дворецĕ умĕнче демонстраци ирттернĕ. Полици демонстрантсем çине пăшалпа пеме пуçланă. Çавăн чухне икĕ демонстранта вĕлернĕ. Нобель хулинче те губернатор çуртĕ умне пухăннă демонстрантсем çине полици пăшалпа пенĕ. 3 çынна вĕлернĕ, 20 çынна амантнă, вĕсенчен 5 çын йывăр аманнă.

«Юманите» хаçат çакăн çинчен пĕлтерет: «Сфакс хулинче Франци çарĕсем араб çыннисене «Европа хули» текен вырăна (Сфакс хулинчи европеецсем пурăнакан района) кĕме чарас шутпа пур çулсене те йышăннă. Анчах ĕнер кăнтăрла хулан арабсем пурăнакан пайĕнчен пин çын ытла тухнă та, çул çинчи пур чăрмавсемпе хуралсене те сирсе, губернатор çурчĕ патне пынă, çав çурта кĕрсе Туниса никама пăхăнмасăр пурăнмалли право пама ыйтса çырнă петицие парса хăварнă.

«Юманите» хаçат Тунис халăхĕ никама пăхăнмасăр пурăнмалли право илессишĕн кĕрешнине Франциri тата Алжирти демократиллĕ организацисемпе ĕççынниcем ырлани, вĕсем пулăшса тăни çинчен пĕлтерет.

Иран правительстви Англи правительствине панă нота

ТЕГЕРАН, январĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Хаçатсем Иран ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Каземи январĕн 20-мĕшĕнче Англи посолне Шеперда панă нотăна пичетлесе кăларнă. Ку нотăра Шеперд Иран правительстви Англин Иранри консульствисене хупса лартма ыйтса çырнă требование хирĕç протестленĕ пирки ответ панă. Иран правительстви хăйĕн нотинче Англи протестĕнче кăларса тăратнă «сăлтавсене» пĕрне те йышăнмасть. «Консульствăсене хупасси çинчен йышăннă решение январĕн 21-мĕшĕ тĕлне пурнăçламалла», тенĕ. Çак ĕç вăл халĕ вăйра тăракан договорсене тата çĕршывсен тĕнчери прависен нормисене хирĕç пымасть, тенĕ нотăра. Англин протестлесе çырнă нотинче ку ĕç 1857 çулхи договора пăсни пулать тесе каланине хирĕç Иран нотинче: хальхи вăхăтра çав договор пирки мĕн те пулин калама кирлĕ мар, ăна «пăшăрхантаракан ĕççем пулса пынă вăхăтра Иран правительствине тата халăхне ирĕксĕрлесе йышăнтарнă», унтанпа çĕр çул иртнĕ, çав вăхăт хушшинче пысăк улшăнусем пулнă, Пĕрлешнĕ нацисен организацине тунă, çĕнĕ коллективлă договорсене туса йышăннă, «çавăнпа та çулте асăннă йышши договорсемпе—çĕр çул каялла тунăскерсемпе, тĕнчери çĕршывсем пĕр-пĕрин хушшинче çыхăнса тăрас ĕçри хальхи принципсемпе килĕшсе тăманскерсемпе—усă курма май çук», тенĕ.

США-ра САМОЛЕТСЕМ ӲКСЕ ÇĔМĔРĔЛНĔ

НЬЮ-ЙОРК, январĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Иртнĕ эрне вĕçĕнче США-ра виçĕ çар самолечĕ ӳксе çĕмĕрĕлнĕ, çавăн чухне 45 çын вилнĕ, 61 çын аманнă.

НЬЮ-ЙОРК, январĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер Элизабет хули (Нью-Джерси штачĕ) патĕнче «Америкэн Эйрлайнс» компанийĕн пассажирсем илсе çӳрекен самолечĕ ӳксе çĕмĕрĕлнĕ. Самолет экипажĕн пур членĕсем те тата 20 пассажир, çав шутра США çар министрĕ пулнă Паттерсон вилнĕ. Самолет пĕр çурт çине ӳкнĕ, пушар тухнă, ку çуртри 3 ача тата пĕр килхуçи хĕрарăмĕ вилнĕ.

Хаçатсем çавăн пек самолет ӳксе çĕмĕрĕлни Элизабет хули патĕнче 1951 çулхи декабрĕн 16-мĕшĕнче те пулни çинчен пĕлтереççĕ.

Кино

„Правда—хорошо, а счастье лучше" комеди экран çинче

Январĕн 23-мĕшĕнче Шупашкарти «Родина» кинотеатрта вырăссен аслă драматургĕ А. Н. Островский çырнă «Правда—хорошо, а счастье лучше» ятлă комедие кăтартма пуçларĕç. Ку вăл Мускаври Ленин орденлĕ государственнăй Пĕчĕк академи театрĕн сцени çинче лартнă спектакле малтăн пуçласа вĕçне çитиччен пĕр улăштармасăр ӳкерсе илнĕ кинофильм. Комедири тĕп рольсене СССР халăх артисчĕсем, Сталинла премин лауреачĕсем Е. Д. Турчанинова, В. Н. Рыжова, РСФСР халăх артисчĕсем Н. И. Рыжов, А. И. Сашин-Никольский, РСФСР тава тивĕçлĕ артисчĕсем А. В. Карцев, Д. С. Павлов тата ыттисем те выляççĕ.

Кино куракансем вырăссен классикĕ А. Н. Островский çырнă «Гроза», «Бесприданница», «Без вины виноватые» пьесăсем тăрăх ӳкернĕ кинофильмсене лайăх астăваççĕ. Çав кинокартинăсене республикăри пур кинотеатрсенче, колхозсенче, шкулсенче юратса пăхнă. Чаплă классикăн «Правда — хорошо, а счастье лучше» комедие Мускаври чаплă театрсенчен пĕринче сцена çинче лартнă вăхăтрах кинопленка çине ӳкерсе илсе пĕтĕм халăха кăтартни совет кинематографийĕн пысăк та пархатарлă ĕçĕ пулса тăрать.

А. Н. Островский çырнă çак комедие чи малтанхи хут 1876 çулта лартса панă. Унтанпа вăл пирĕн çĕршыври театрсен репертуарне çирĕппĕн кĕрсе, вĕсен ылтăн фончĕ пулса тăнă.

Комедире çемьере авалтан пыракан кивĕ те юрăхсăр йĕркесем, йăласем, арканса, çĕнелсе пыма тытăннине, пурнăçра çĕнĕ геройсем палăрма пуçланине кăтартса панă. Çав çĕнĕ геройсен тавракурăмĕ çителĕклĕ пулман пулин те, вĕсем хăйсен прависемпе никама пăхăнманлăхĕ, телейĕ çине çирĕп те пĕр иккĕленмесĕр шаннă.

Çĕнĕ ăрăвăн представителĕсем—Платон Зыбкинпа Поликсена Барабошева—комедири геройсем пулса тăраççĕ. Вĕсен еппе каярахпа нянька Фелицета куçать.

Пьеса телей ăнсăртран килсе тухнă пек—çапла вара пурте лайăх пулнă пек вĕçленет. Анчах аслă драматург çакна телей тĕрĕслĕхĕ пула кăна пулма пултарнине питĕ те витĕмлĕ кăтартса панă. Совет çыннисем ăна çапла ăнланаççĕ—тĕрĕслĕхе пула кăна телей пулма пултарать, тĕрĕслĕх, чăнлăх çеç этеме телей кӳме пултараççĕ.

«Правда—хорошо, а счастье лучше» кинофильм икĕ серирен тăрать. Кинофильмăн икĕ серине те пĕр кунтах кăтартни пьесăна лайăх ăнланма май парать, нумайăшха асра хăварать. **Н. МИНИН.**

ПРЕМИ ПАНĂ

ОКТЯБРЬСКИ. «Звезда» колхоз вăрман касса хатĕрлемелли, каснă йывăçа çул хĕррине илсе тухмалли тата турттармалли сезонри плана январĕн 5-мĕшĕ тĕлне тултарчĕ.

Йĕпреç вăрманпромхоз дирекцийĕ вунпĕр колхозника лайăх ĕçленĕшĕн преми панă.

Паян парткабинетра

Паян, январĕн 25-мĕшĕнче, каçхине 8 сехетре, ВКП(б) хула комитечĕн парткабинетĕнче çакăн пек лекцисемпе занятисем пулаççĕ.

Марксизм-ленинизм классикĕсен уйрăм произведенийĕсене харпăр хăй тĕллĕн вĕренекенсем валли çак темăсемпе лекцисем вуласа параççĕ:

1. Империализм—капитализмăн монополиллĕ сыпăкĕ (иккĕмĕш лекци).
Лектор—П. Л. Лебедев юлташ.
2. В. И. Ленин «Материализм тата эмпириокритицизм» ятлă кĕнеке çырса идеализма çĕмĕрсе тăкни (иккĕмĕш лекци).
Лектор—М. Г. Григорьев юлташ.

* * *

И. В. Сталин биографине вĕренмелли кружок руководителĕсен семинарĕ пулать. Заняти теми: И. В. Сталинăн кĕске биографийĕн VIII-мĕш пайĕ тăрăх заняти ирттересси çинчен.

Семинар руководителĕ—Н. А. Смирнова юлташ.

ВКП(б) ХУЛА КОМИТЕЧĔ.

„Чăваш Коммуни" хаçатăн çитес номерĕ январĕн 27-мĕшĕнче тухать.

Ответлă редактор М. К. КОСТИН.

Шупашкарти тата республикăри кинотеатрсенче

„СЕЛЬСКИЙ ВРАЧ"

ятлă илемлĕ фильм кăтартма пуçларĕç.

Сценари авторĕ — М. Смирнова.
Фильма лартаканĕ — Сергей Герасимов.
Композитор — Н. Будашкин.
Фильмра музыка калаканĕ — СССР Кинематографи министерствин оркестрĕ.
Дирижер — А. Ройтман.

Рольсене выляакан артистсем:

Тамара Макарова, Григорий Белов, В. Санаев, А. Дудоров, В. Капустин, И. Куз/нецов, И. Макарова.
Фильма Мускаври М. Горький ячĕпе тăракан киностуди ӳкернĕ. 1951 çул.
Экрансем çине Главкинопрокатăн Чăваш республикăри кантурĕ кăларать.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: ответлă редактор—0-67, ответлă редактор заместителĕ—3-99, ответлă секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—5-74, парти пурнăç пайĕ—4-17, ял хуçалăх пайĕ—3-97, пропаганда пайĕ—8-61, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—8-61, çырусем пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 00319 Типография № 1 Чувашполиграфиздата. Тираж 20.000 экз.